чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

32 /26438/№ Кĕçнерни кун, 2014, нарăс (февраль), 20 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


## Саламлатпăр

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 13-мĕшĕнче кăларнă 74 №-лĕ хушăвĕпе килĕшӳллĕн ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн, Раççей Федерацийĕн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн, гуманитари сферинчи, саккунлăха çирĕплетес тата граждансен прависемпе интересĕсене хӳтĕлес ĕçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн, нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин "К.В.Иванов ячĕллĕ Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ" автономи учрежденийĕн артистне **Владимир Валентинович СЕМЕНОВА "РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ АРТИСЧĔ"** хисеплĕ ят панă.

# Пухмач пуянланать

***Кăçалхи кăрлач уйăхĕн 31-мĕшĕнче вун саккăрмĕш хут вăй илнĕ «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» марафон пухмачĕ кунсерен пуянланса пырать. Сахал тупăшлă çемьесенче çитĕнекен пултаруллă çамрăксене пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшмашкăн, сусăр ачасене, тăлăхсене тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисене сиплемешкĕн Чăваш Енĕн ăш пиллĕ çыннисем – граждансем, ĕç коллективĕсем, общество организацийĕсем – çак уйăхăн 17-мĕшĕ тĕлне 403922,36 тенкĕ хывнă.***

Ку енĕпе уйрăмах Вăрнарсем /70505 тенкĕ/, Шупашкарсем /106008/ тата Елчĕксем /148150/ пуçарullă пулнине палăртмалла. Хĕрлĕ Чутайсен /12370/, Красноармейскисен /12000/, Канашсен /11530/, Шăмăршăсен /10804/ тӳпи те курăмлă.

Елчĕк районĕнчи «Марс», «Сатурн», Ленин ячĕллĕ ЯХПКсем, «Эметтево», «Победа», «Клевер», «Яманчурино» ОООсем 3-шер пин тенкĕ куçарнă, БТИ, «Прогресс» АХО, Яманчӳрел сельхозхимийĕ – 5-шер пин, «Рассвет» ЯХПК – 3,7.

Граждансем те марафона хастар хутшăнаççĕ: Елчĕкри Н.Орлова – 850, Л.Зайцева – 830, И.Аникина, Кĕçĕн Таяпари В.Васильев, Аслă Елчĕкри С.Прокопьев 1000-шер тенкĕ хывнă...

Шупашкар хулин Мускав районĕнчи предприяти-организаципе уйрăм çынсем те сăваплă юхăмран юлмаççĕ, йывăр шăпаллисене хăйсен ырăлăхĕпе савăнтарма васкаççĕ. Тĕслĕхрен: социаллă пулăшу пайĕн ĕçченĕсем марафон пухмачне 3050 тенкĕлĕх пуянлатрĕç, ача-пăча библиотекисен централизациленĕ тытăмĕн хастарĕсем 7750 тенкĕлĕх пулăшупа тивĕçтерчĕç. «Солнышко» садик коллективĕ вара 3100 тенкĕ уйăрнă.

Ача-пăча фончĕн марафонне çынсем кĕмĕлпе кăна мар, япалапа та пуянлатаççĕ. Шупашкарти тĕп пасарта сутă тăвакан предпринимательсем, сăмахран, 50 пин тенкĕлĕх кĕпе-тум, «Вăрман юмахĕ» санатори сахал тупăшлă çемьесенче çитĕнекенсен, тăлăхсен тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисен канăвне йĕркелемешкĕн 55 пин тенкĕлĕх путевка уйăрнă.

Республикăри пукане театрĕн пултарулăх ушкăнĕн тӳпи те сумлă: нарăс уйăхĕн 13-мĕшĕнче вăл çамрăк куракансене – тăнăçсăр çемьере çитĕнекенсене – «Кĕл пике» спектакль парнелерĕ. «Ырăлăх хăвачĕ» ятпа иртнĕ мероприятие артистсем «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» марафона халалланă. Билет хакне саплаштаракансем – ăнăçлă ĕçлекен хастарсем – республикăри хĕрарăмсен канашĕн район-хулари маттурĕсем. Пухăннă укçа-тенкĕ обществăн асăннă организацийĕн фондне хывăннă. Унăн председателĕ Лариса Игнатьева пĕлтернĕ тăрăх – кӳмесемпе çӳрекен ачасене çав нухратпа юрăхлă хутлăх туса пама – пукане театрĕнче пандуссем тата çĕклекен хатĕрсем вырнаçтарма – палăртаççĕ. Çапла майпа вĕсем кунти тĕрлĕ мероприятие тăтăшах килсе курма май тупĕç.

«Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» акцие кашниех хăйĕн тӳпине хывма пултарать. Çапла тумашкăн «Раççей ача-пăча фончĕн» регион уйрăмне /Шупашкар хули, Петров урамĕ, 7-мĕш çурт/ пымалла е /8352/ 62-89-42 телефонпа шăнкăравламалла.

Марафон шучĕпе укçана общество организацийĕн счечĕ çине куçарма юрать. Кăçал унăн пухмачне СМС ярса пуянлатма пулать. Ырă тума васкăр. Пирĕн тивĕç – хӳтлĕхсĕр ачасен шăпине çăмăллатма хутшăнасси, вĕсене хамăрăн тимлĕхе туйса илмешкĕн май туса парасси. Ют ачасем çук, вĕсем пурте пирĕн. Апла тăк эпир вĕсен пуласлăхĕшĕн яваплă.

Хаклă вулаканăмăрсем, эсир те сăваплă юхăма пуçарullă хутшăнасса шанса «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонĕн реквизичĕсене аса илтеретпĕр:

ЧРО ООБФ «Российский детский фонд»

ИНН 2128005408/КПП 213001001

Р/с 40703810075220160067 в Чувашском ОСБ № 8613 г.Чебоксары

БИК 049706609, кор/с 30101810300000000609

■ **Валентина СМИРНОВА**

*Информаци кунĕ*

# Паян – ĕнерхинчен...



***Ĕнер республикăра Информаци кунĕ иртрĕ. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарти «ЧЭТА» общество коллективĕпе тĕл пулчĕ.***

сар.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

Ку предприятие 2009 çулта çĕç йĕркеленĕ пулин те производствăн çĕнĕ корпусĕсемпе администраци çуртне хута янă. М.Игнатьев завод туса кăларакан электрооборудованипе паллашрĕ. Ăна «Газпром», «Транснефть» обществăсене, хими, металлурги, электроэнергетика предприятийĕсене сутаççĕ. Пĕлтĕр вичĕм çулхинчен 33,4% нумайрах ăсатнă.

Кунта 127 çын вăй хурать. Уйăхри вăтам ĕç укçи – 60,9 пин тенкĕ! Ĕненменнипе рабочипе калаçрăм. «Хĕрĕх-аллă пин тенкĕ параççĕ, – хуравларĕ электрошкап пухаканни. – Корпуссенче ăшă, кăнтăрла предприятирех апатланатпăр, ĕç тивĕçтерет, кăмăл çĕкленӳллĕ». Чăваш Ен Пуçлăхĕ электроаппаратура пуçтаракансемпе калаçрĕ. Вĕсем ĕç укçи тивĕçтернине палăртрĕç. «ЧЭТА» компани йышĕнче тата 3 общество: «Искра НКУ», «ЭНИ», «ЭГИ». Компанире 300 яхăн çын ĕçлет. Ялта пурăнакансенчен чылайăшĕн çавнашкал заводра вăй хурасса ĕмĕтленме кăна тивет.

Михаил Игнатьев инженерсемпе рабочисене республикăн социаллă пурнăçĕпе экономикин пĕлтĕрхи апатланăвĕн кăтартăвĕсемпе паллаштарчĕ. Федерацие республикăн социаллă мĕн пур программи пурнăçланнине, вĕсене малалла тăснине пĕлтерчĕ. Тĕп хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов шкул çулне çитиченхи ача-пăчана садиксемпе тивĕçтерес, пурăнмалли çуртсен картишĕнчи çул-йĕре асфальт сарас ĕç еплерех пыни çинчен каларĕ.

Ытти ыйту чылай пачĕç. Пĕри энерги перекетлекен электролампăсен каяш вырăнне пĕлесшĕн пулчĕ. «Юрăхсăра тухнисене Шупашкарти «Меркурий» общество пухать», – пулчĕ хурав. Иккĕмĕшне Çĕрпӳ районĕнчи «Богатырь» совхозран юлнă пурлăх шăпи пăшăрхантарчĕ. Патăрьел ял администрацийĕ вырăх витисене, ытти объекта, клуб çуртне сутнă. Çынсем ĕç вырăнĕсĕр. Çак ыйтăва пăхса тухасчĕ», – ыйтрĕ вăл.

М.Игнатьев Çĕрпӳ район администрацийĕн пуçлăхĕпе Сергей Артамоновпа телефонпа çыхăнса ăна тишкерме шантарчĕ. Виççĕмĕшĕ тĕп хулари ача-пăчан 2-мĕш музыка шкулĕ вырнаçнă пурăнмалли çуртпа çыхăннă ыйтăва çĕклерĕ. «Ачасем пĕрремĕш хутра баян, фортепьяно калаççĕ – сасă иккĕмĕшпе виççĕмĕш хутсенче пурăнакансене канăçсăрлантарать. Шкула урăх çурта куçарма çук-ши?» – кăсăкланчĕ вăл.

«Кăçал 2-мĕш шкул валли çурт хăпартма хыснара укçа палăртман», – хуравларĕ хула пуçлăхĕ. Сăмах май, ăна Сĕнтĕрвăрри çулĕ шăтса-путса автотранспорта çӳреме юрăхсăрланнă пирки сăмах тиврĕ.

Михаил Игнатьев тикĕс мар çулсем автомобилистсене инкек кӳнине пытармарĕ. «Çулсене юсама, шăтăк-путăка саплама пĕлтĕр Чăваш Ен Çул-йĕр фондĕнче 2,7 млрд тенкĕ пухрăмăр, – терĕ. – Ăна çулсене çĕнетме, вĕсене пăхса тăрассипе çыхăннă ытти ыйтăва татса пама янă».

М.Игнатьев ыйтусене хуравласа алкоголь продукцийĕн çаврăнăшĕ çинчен калакан саккуна пăснăшăн 4 лавккаран эрех сутма ирĕк паракан лицензи туртса илес ыйту тăратассине, Атăл леш енчи поселоксене газ кĕртес тĕлĕшпе пуçарнă ĕçе малалла тăсассине, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хушшинчи Çĕнĕ хулара 2 садикпе шкула хута ярассине пĕлтерчĕ. «Кăçал республикăри ачасен сывлăхне çуллахи каникул вăхăтĕнче çирĕплетмелли çĕнĕ çурт çĕклеме палăртман, – терĕ вăл. – Çапах та ачасене çав учрежденисене ямашкăн путевка уйăрмалли йĕркене ансатлатрăмăр. Ашшĕ-амăшĕ ăна илнĕ чух черетре иртнĕ çулсенчи пек нумай тăмарĕ».

Шупашкар-Çĕнĕ Шупашкар маршрутпа куллен ĕçе çӳрекенсем Питтукассинчи йăлари хытă каяш вырăнĕн пуласлăхĕпе кăсăкланчĕç. «Унăн пуласлăхĕ çук, – хуравларĕ Михаил Игнатьев. – Çĕнĕ Шупашкар çывăхĕнчи хытă каяш полигонне ĕçе кĕртсенех ăна хупатпăр».

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**


***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар"Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ. «Хыпар» – 460-86 тенкĕ.***


## КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26

### «Пĕтĕм халăх диктантне» хатĕрленме вăхăт

***«Пĕтĕм халăх диктанчĕ» акци кăçал Космонавтика кунĕнче – ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче – иртĕ. Унта хутшăнма тĕнчери 60 çĕр-шыв, Раççейри 200 хула хутшăнма кăмăл пурри çинчен пĕлтернĕ. Ăна ку хутĕнче те Новосибирск патшалăх университечĕн преподавателĕсемпе студенчĕсен ушкăнĕ пуçарĕ.***

Çакнашкал акци планетăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакансене вырăс чĕлхине мĕнлĕрех пĕлнине тĕрĕслеме май парать. Кĕтнĕ пек пулас тăк кăçалхи акцие 45 пин çын хутшăнмалла. Пĕлтĕр пирĕн республика кунашкал мероприятие пуçласа хутшăнчĕ пулин те кăтартусем кĕтнинчен лайăхрахчĕ.

Кăçал хăйсен çырури пĕлĕвне тĕрĕслеме кăмăл тăвакансене филологсем халех пулăшма хатĕр. Нарăсăн 21-мĕшĕнчен тытăнса И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУра (пирĕн республикăра акци шăпах унăн тата «Советская Чувашия» хаçат пуçарăвĕпе) кашни эрне кун заняти иртĕ. Унта вырăс чĕлхинчи тĕп правилăсене аса илтерĕç.

Хальлĕхе пулас диктантăн текстне кам хатĕрлесси – вăрттăнлăхра. Ăна Интернет-эфирта трансляцилесси вара паллă.

Сăмах май – вырăс чĕлхипе диктант çырнă хыççăнах чăвашсем те хăйсем тăван чĕлхине еплерех пĕлнине çак мелпе тĕрĕслеме пултарĕç. Йăхташсем йышпа диктант çырассине кăçал та Чăваш чĕлхин кунĕнче йĕркелеме палăртаççĕ. Ун çинчен тĕплĕнрех каярах пĕлтерĕпĕр.

**А.КУПРИЯНОВА.**

### Çыхăну çирĕпленет

***Пĕлтĕр Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеçри культура центрĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕсем Юхмапа Пăла тăрăхĕнчи Тури Тăрмăшпа Пăлаçи Атăк ялĕсене концерт программипе савăнтарнăччĕ.***

Çак кунсенче вара Çĕньял ял тăрăхĕнчи «Илем» фольклор ушкăнĕ Кивĕ Эйпеçсем патĕнче хăнара пулнă. Шкулти акт залне халăх йышлă пухăннă. Куракансем ытларах анатри чăвашсен халăх юррисене ăшшăн йышăннă.

Кивĕ Эйпеç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Василий Казанцев хăнасене ăшшăн тав тунă. Кăçал, Культура çулталăкĕнче, уйрăмах килĕштерсе ĕçлемеллине палăртнă. Тĕл пулу тĕлне Кивĕ Эйпеçсем чăваш наци апат-çимĕçĕ янтăланă.

**Р.АНАТОЛЬЕВА.**

### Сĕнтĕрвăррисен ташши

***Сĕнтĕрвăрри хулинче районти вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕ тата культурăпа туризм çурчĕ пуçарнипе ташăçăсен фестивалĕ иртнĕ.***

Унта районти шкул командисен ăсталăхне тĕрлĕ енлĕн тĕрĕсленĕ. Пĕрремĕш конкурсрах çамрăк артистсем хăйсемпе паллаштарнă, иккĕмĕшĕнче хальхи кĕвĕ-çемĕн хăйне евĕрлĕхĕпе халăх ташшисен пуянлăхне кăтартнă. Ташăçăсен балĕнче профессионалсем тупăшнă тейĕн: пурте хастар та хăюллă пулнă.

Жюри членĕсене хулари 1-мĕш гимназире вĕренекенсен сатурлăхĕ уйрăмах килĕшнĕ, вĕсене чи сумлă парнепе чысланă. Кукашни шкулĕн «Ритм» ушкăнĕ иккĕмĕш вырăн йышăннă, Хуракасси ялĕнчи «Экстрим» – виççĕмĕш. «Командăн чи лайăх ертӳçи» ята Кукашни шкулĕн хĕрĕ Надежда Николаева тивĕçнĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Вĕрентекене асрах тытаççĕ

***Патăрьел районĕнчи Сăкăт шкулĕнче халĕ спорт уйăхлăхĕ иртет. Вĕренекенсемпе вĕрентекенсем унта хастар хутшăнаççĕ. Уроксем хыççăн та, канмалли кунсенче те тĕрлĕ ăмăрту, спорт вăййи, конкурс, тĕл пулу иртет. Çав вăхăтрах Сочире иртекен Олимп вăййисене те пăхаççĕ.***

Çак кунсенче вара пĕлӳ çуртĕнче йăлана кĕнĕ тăрăх Николай Кузнецов учителе асăнса волейбол турнирĕ иртнĕ. Физкультура предметне вĕрентнĕ Николай Аврамович пурнăçран уйрăлнăранпа çулпа çул чылай ылмашнă ĕнтĕ. Апла пулин те унăн ырă та çутă сăнарĕ вĕренекенсен, ĕçтешĕсен асĕнчен тухмасть. Турнирта яшсемпе хĕрсен, учительсен чылай команди вăй виçнĕ. Николай Кузнецовăн кубокне вара 11-мĕш класс волейболисчĕсем тивĕçнĕ.

**А.ГРОМОВА.**

### Пьедестал çинче – пулас олимпçăсем

***Канмалли кунсенче спортăн хĕллехи тĕсĕсен центрĕ республикăри чи хастар йĕлтĕрçĕсене пухнă. 230 яхăн спортсмен Чăваш Ен чемпионĕн ятне çĕнсе илессишĕн тупăшнă.***

Сочире иртекен Олимп вăййисене халалланă ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнче йĕлтĕрçĕсем классика мелĕпе тĕрлĕ дистанцире вăй виçнĕ. Хăйсен ушкăнĕсенче Шупашкар районĕнчи Николай Федоров, Джамилия Барановăпа Кристина Львова, Çĕрпӳ тăрăхĕнчи Алексей Иванов, Канашри Леонид Евлампьев çĕнтернĕ. Тĕлĕнмелле: чемпионатăн иккĕмĕш кунĕнче те вĕсене çитекенни пулман, чи лайăх кăтартусемпе палăрнăскерсем республика чемпионĕн ятне тивĕçнĕ. Палăртма кăмăллă: пурте вĕсем Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 2-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптаççĕ, тĕрлĕ ăмăртура Чăваш Ен тата Раççей чысне хӳтĕлеççĕ. «Пирĕн шанăç, пулас олимпçăсем», – тенĕ йĕркелӳçĕсем çĕнтерӳçĕсене хавхалантарса.

**А.МИХАЙЛОВ.**


● ➡ *3 стр. «Спорт» кăларăм.*


### Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать, юр çукалать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 0, каçхине 6 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 744 мм, сывлăшри нӳрĕк 85 процент.

**Кун тăршшĕ 9 сехет те 59 минут.**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



# «ПĔР ЧӲРЕЧЕ» ХАЛĂХА ÇĂМĂЛЛĂХ КӲРЕТ

**Республикăн ăнăçлă аталанăвне экономика ӳсĕмĕн тата ирттерсе пурнăçланă кăтартусен куçа савăнтаракан хисепĕсем мар, халăхăн социаллă пурнăçĕн ытлă-çитлĕхĕ, вăл патшалăх тата муниципалитет паракан пулăшу ĕçĕсемпе кăмăллă пулни, общество-политика çирĕплĕхĕ палăртаççĕ.**

**«Чăваш Енре пурăнакансем пирĕн ĕçе шăпах çавсене пăхса хаклаççĕ. Республика тăрăх час-часах çӳренĕ май куратăп: çынсене илĕртӳллĕ статистика та, «Чăваш Ене мĕнлерех йĕркелемелле» темăпа юмахлани те кирлĕ мар. Вĕсем влаç органĕсенчен пурнăç пахалăхне лайăхлатма пулăшакан пайăр ĕçсем кĕтеççĕ», – тенĕччĕ республика Пуçлăхĕ Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче. Çак тĕллеве пурнăçласа Чăваш Енре ырă ĕçсем туса ирттерни куç кĕрет.**

**Чи малтанах Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Путинăн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче кăларнă указĕсене пурнăçланине палăртар. Вăл шăпах республикăра пурăнакансен пурнăç шайне ӳстермелли тĕп мелсенчен пĕри. Унпа килĕшӳллĕн Чăваш Енре пурăнакансем Патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕнче пулăшу ĕçĕсен 69 тĕсĕпе электрон мелпе туллин усă курма пултараççĕ. Иртнĕ ĕмĕрте компьютер хатĕрĕсемпе çамрăксем ытларах туслашнă тăк паян аслă ăру çыннисем те вĕсемпе ăнăçлă ĕçлеççĕ. Ку енĕпе муниципалитетсен общество центрĕсем витĕмлĕ пулăшу пачĕç. Тĕслĕх библиотекăсем те курăмлă ĕçлерĕç. Вĕсем шăпах аслă ăру çыннисене компьютер хатĕрĕсемпе усă курма хăнăхтарчĕç. Вăхăт таппипе тан утма тăрăшакан паян информаци технологийĕсемпе çăмăллăнах усă курать.**

**Юлашки çулсенче районсенче усăллă нумай функциллĕ центрсем халăха патшалăх тата муниципалитет паракан пулăшу мелĕсемпе туллин усă курма май параççĕ. Хальлĕхе вĕсем пĕрремĕш утăмсем кăна тăваççĕ. Апла пулин те ӳсĕм пурри куç кĕрет. Центрсем «пĕр чӳрече» принципа тĕпе хурса ĕçлеççĕ. Программа тĕллевĕ – патшалăх органĕсемпе муниципалитетсем халăха паракан пулăшу ĕçĕсем пирки çынсем хăвăрт тата тулли информаци илме пултарччăр.**

**Çак центрсен тухăçлăхĕ, паллах, ытларах чухне унта ĕçлекенсенчен килет. Акă Етĕрне район администрацийĕн иккĕмĕш хутĕнче вырнаçнă центра çынсем тулли кăмăлпа çӳреççĕ. Ирина Шоронова директор ăнлантару ĕçне тивĕçлĕ шайра йĕркеленĕ. Çак ĕçе ертӳçĕсене те явăçтарма тăрăшать. Кунта çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пултаракансем ĕçлеççĕ. Вĕсем патшалăх органĕсемпе муниципалитет паракан пулăшу мелĕсен программисене лайăх пĕлеççĕ.**

**Иртнĕ çулхи пуш уйăхĕнче ĕçлеме тытăннă центрта вăй хуракансем тĕп çул-йĕре тĕрĕс палăртнă. Пĕлтĕрхи тăхăр уйăхра кунта 3629 çын тĕрлĕ ыйтупа пынă, 805 хутчен консультацие тивĕçтернĕ, 2824 заявлени йышăннă. И.Шоронова палăртнă тăрăх – ялта пурăнакансем тĕрлĕ справка илессишĕн малтанхи пек вăл е ку организацире сехечĕ-сехечĕпе черетре тăрса вăхăта ирттермеççĕ, пӳлĕмрен пӳлĕме чупса та хăшкăлмаççĕ. Центр кирек хăш ыйтăва та хăвăрт татса парать. Президент указĕнче çынсен черетре 15 минутран ытла кĕтмелле мар тесе палăртнă. Малашне çапла пулĕ те: пулăшу мелĕсен пахалăхĕ те лайăхланĕ, кĕтмелли вăхăчĕ те кĕскелĕ.**

**Ялсенчи тĕслĕх библиотекăсенче те «пĕр чӳрече» мелĕпе усă курма пулать. Капла аякри ялсенче пурăнакансене патшалăхпа муниципалитетсем паракан пулăшу ĕçĕсемпе туллин тивĕçтерме çăмăлрах. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хусанушкăнь ял тăрăхĕнче пурăнакансем Сĕнтĕкçырминчи вулавăшри компьютер урлă больницăна вăл е ку врач патне черете çырăнма пултараççĕ. Библиотекарьсем Патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕпе те çăмăллăнах усă кураççĕ. Етĕрне районĕнче 12 тĕслĕх библиотека «пĕр чӳрече» мелĕпе 27 тĕрлĕ муниципалитет пулăшăвĕпе тивĕçтерет. Ку пуриншĕн те меллĕ. Акă çемье çаврăма шухăш тытнă çамрăксем заявлени çырма район центрне кайса вăхăта ирттермеççĕ, ЗАГС пайне электрон мелĕпе çыру-заявлени яраççĕ. Ача усрава илес текенсем те электрон мелĕпе черете тăма пултараççĕ.**

**Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен вĕçнелле район пуçлăхĕн йышăну пӳлĕмĕнче кашни тунти кун 50-60 çын черетре тăратчĕ. Унсăр пуçне кунсерен килекен те пайтахчĕ. Паллах, ертӳçĕсене те çăмăлах пулман. Халăха йышăннă самантсенче вĕсем районшăн пĕлтерĕшлĕ вун-вун ыйтăва татса пама пултарнă. Çынсем те пăшăрхантаракан ыйтусен хуравне тупма аякри ялсенчен килнĕ. Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, малалла шăвать. Паян кун-çул ултинчен юлманнисем патшалăх пулăшăвĕпе туллин усă кураççĕ. Халăхпа влаç хушшинчи çыхăну тата та çирĕпленет, уççăнлăх принципĕ те вăй илет.**

■ **Юлия МАРЕЕВА**

*Аталану çулĕпе*

# Çĕр улми сумĕ ан чактăр

ВЫСТАВКА КАРТОФЕЛЬ 2014 ЧЕБОКСАРЫ · КУРАВ ÇĔР УЛМИ 2014 ШУПАШКАР

***"Çĕр улмине мухтав" агрофирма" юлташлăх çур акине хатĕрленет. Чăваш Енре "иккĕмĕш çăкăр" çитĕнтерес енĕпе ÿсĕмлĕ ĕçлесе пыракан хастар йышăн 14-мĕш ĕççийĕ ку. Хуçалăх тилхепине Хасиятулла Идиатуллин тытнăранпа шăп та лăп вунă çул.***



2001 çултанпа çĕр улми лаптăкне 35 гектартан 780 гектара çити ÿстернĕ, унччен ăна çуллен 714 тонна кăларса пухнă, чи нумаййи – 23800 тонна. Тухăç вăтамран 310 центнерпа танлашнă. Ку тÿпеме хăпарма нумай вăй хуни каламасăрах паллă.

Пысăк пахалăхлă çĕр улми вăрлăхĕ хатĕрленипе пĕрлех тĕш тырă, кишĕр, хĕрлĕ кăшман, рапс, горчица акаççĕ. Тыр-пул 2500 гектар йышăнать. Вăрлăх фондне тивĕçлĕ шайра тытас тĕллевпе çуллен 30 ытла сорта сăнаса пăхаççĕ. Европăри, Беларуçри, хамăр çĕр-шыври селекци институчĕсем сĕннисем вĕсем. Сăнав тапхăрĕ темиçе çула пырать, вырăнти тата ытти регионти хуçалăхсене паха вăрлăх сĕнеççĕ. Пултаруллă ĕçленипе Раççейри улма туса илекен кăтартуллă хуçалăхсен шутне кĕнĕ, Чăваш Енри "Агропромышленноç комплексĕнчи чи лайăх 100 предприяти" списокĕнче малти ретре.

Çитĕнÿ никĕсĕ – агрономи службин /ертÿçи – Алексей Селиванов/ ĕçне пĕлсе йĕркеленинче. Хăйсен тивĕçне лайăх ăнланакан специалистсем наукатĕпчев организацийĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Биологи препарачĕсемпе удобренисем пахча çимĕçе мĕнле витĕм кÿнине тĕплĕ тишкересси йăлана кĕнĕ. Пĕлĕве, квалификацие ÿстерессие те тĕп вырăнта. Юлашки çулсенче агрофирма нумай çĕнĕ техника туянчĕ, вĕсен хушшинче Раççейре туса кăларнисем çеç мар, чикĕ леш енчен кÿнисем те пур. Ятарлă программăна ĕçе кĕртни çĕнĕ технологисене хăвăрт алла илме май парать.

Пурнăç теме те вĕрентет, агротехникăри ĕç мелĕсем улшăнса, çĕнелсе пыраççĕ. 2008-2009 çулсем Каçалсемшĕн ăнăçлă пулчĕç. Анчах 2010 çулхи типĕ çанталăкра ял çынни нумай çухату тÿснине асăнмалла. Тивĕçлĕ пĕтĕмлетÿсем тунă. Тепĕр çул çĕр улмин 120 гектарне шыв пĕрĕхтерекен агрегатсем вырнаçтарнă. Республикăра пуринчен малтан лаптăкăн-лаптăкăн шăвармалли механизма ĕçе кĕртрĕç. 2013 çулта улман – 235, пахча çимĕçĕн 70 гектарне "çумăр çутарнă". Кăçал тепĕр 100 гектар шăварма палăртаççĕ.

Çапах çулпа çул пĕр килмест. Вăрлăх çĕнетĕвне куçран вĕçертмен. Пысăк репродукциллĕ сортсене ытларах хамăр çĕр-шыврине туянаççĕ, Голланди, Германи тата Финлянди тĕслĕхĕ те пĕлтерĕшлĕ. Вĕсен вăрлăх лартса тăвакан предприятийĕсем пуян опыт пухнă. Сывă, вируспа чирлемен, элита класлă улма тухăçĕ аван.

– 2010 çулхи шăрăх пирĕн отрасле пысăк сиен кÿчĕ. Çав инкексенчен хăш-пĕр хуçалăх паян та хăтăлаймасть, – каласа парать тĕп директорăн производство енĕпе ĕçлекен çумĕ Алексей Селиванов. – Хĕвел çунтарăвне лексе аманнă вăрлăхран лайăх тухăç илеймĕн, упрама хуни те часах юрăхсăра тухать. Шел те, кÿршĕсенчен хăшĕ-пĕри çав улмана лартнă тĕслĕх пур. Эпир 2010 çулхи çимĕçе производствăран кăлартăмăр. Тавар туянакан чи малтанах продукци пахалăхне пăхса хаклать-çке.

Çĕнетсе улăштарнă "Удача", "Невский", "Романо", "Пикассо", "Ред Скарлетт", "Гала", "Латона" сортсем лайăх çитĕнеççĕ.

Кашни çул вăрлăхăн пĕрре виççĕмĕш пайне çĕнетеççĕ. Продукцие тирпейлесе упрасси – çивĕч ыйтусенчен пĕри. Агрофирма хăйĕн 15 пин тонна пахча çимĕç хумалли управĕпе мухтанма пултарать. Шалти температура, нÿрĕк виçине автоматика йĕркелет. Кăçал тепĕр тăватă пин тонна хумалли ангар туса пĕтересшĕн. Унта улмана контейнерсенче тытмалли уйрăмсем пулĕç.

Директорăн маркетинг енĕпе ĕçлекен çумĕ /çирĕп хуçалăхсенче çавнашкал должноç та пур иккен!/ Олег Мартышин пĕлтернĕ тăрăх – чăваш вăрлăхĕпе апат-çимĕç улмине Раççейĕн кăнтăр регионĕсенче хаваспах туянаççĕ. Волгоград, Ростов облаçĕсемпе, Ставрополь, Краснодар крайĕсенче агрофирма продукцийĕ хăвăрт сутăнать. Унти хуçалăхсен хăйне евĕрлĕх пур-мĕн. Çанталăк ăшă тăнипе вăрлăх туса илеймеççĕ, яланах чăвашсенчен пулăшу ыйтаççĕ. Паллах, продукцин ытларах пайне хамăр республикăра вырнаçтараççĕ. Чăваш Енри хуçалăхсене вăрлăх сутнă чухне хăшпĕр çăмăллăха вăя кĕртнĕ.

О.Мартышин шухăшĕпе килĕшмелле. Тĕнче опытĕнченех паллă: пĕри – вăрлăхпа, тепĕр хуçалăх апат-çимĕçе каякан улмапа ĕçлессине вăйлатсан çеç отрасль аталанăвĕ кал-кал пулса пырĕ.

Агрофирма çĕр пулăхлăхне ÿстермелли тĕрлĕ майпа ăнăçлă усă курать. Пусă çаврăнăшне тăватă сыпăка уйăрнă. Пĕрремĕш çулне хирте рапс акаççĕ, иккĕмĕшĕнче – кĕрхи тулă, виççĕмĕшĕнче çĕр улми лартăнать, тăваттăмĕшĕнче – çурхи тулă. Кĕрхи тулă туса илнĕ уйра "иккĕмĕш çăкăр" уйрăмах ăнса пулнине практика çирĕплетет. Касăсенче çум курăк сахалрах, ÿсен-тăран чир-чĕртен лайăхрах сыхланать.

– Вăрлăхпа кăсăкланакансене тулли информаципе тивĕçтеретпĕр, – терĕç маркетинг пайĕнче. – Улма лартса ÿстерес ĕçре хăйне евĕрлĕх чылай. Рынок ыйтăвне чухламалла. Çав тĕллевпе эпир Раççейри куравсене тăтăшах хутшăнатпăр. Кашнинче мĕн те пулин çĕннине пĕлсе килетĕн.

■ **Григорий СЛАВИН.**
Комсомольски районĕ

*Çитĕнÿ*

# Сумлă конкурсран – ылтăн медальпе

БУКЕТ ЧУВАШИИ 1974

***Шупашкарти "Букет Чувашии" АУО Мускавра иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери "ПРОДЭКСПО-2014" апат-çимĕç тата ĕçме-çиме 21-мĕш куравĕнчен виçĕ ылтăн медальпе таврăннă.***

Ку форум Раççейшĕн тата Хĕвел тухăç Европăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ: вăл апат-çимĕçпе ĕçме-çиме сферинче чи сумлисенчен пĕри шутланать, çĕр-шыври апат-çимĕç индустрийĕн векторне палăртать. Кăçал ку курав тĕп кăтартусемпе хăйĕн малтанхи рекорчĕсенчен те иртсе кайнă. Нарăс уйăхĕн 10-14-мĕшĕсенче ĕçленĕ çак мероприятие тĕнчери 63 çĕр-шывран 2300 экспонент хутшăннă, çав шутран 1377-шĕ – Раççейрен. Çапла вара ертсе пыракан компанисем апат-çимĕçпе ĕçме-çиме чи пахалăхлă та инноваци продукчĕсемпе паллаштарнă.

"Букет Чувашии" АУО асăннă мега-форума кăçалхипе улттăмĕш хут хутшăннă. Шупашкар компанийĕ хатĕрлекен кваса, ĕçмелли тата минерал шывĕсене, алкогольсĕр шĕвексене нумайăшĕ тутанса пăхнă, вĕсем пахалăхлă та тутлă пулнине палăртнă. Фирма специалисчĕсем "Букет Чувашии" тата вăл кăларакан кашни продукт пирки тулли информаци панă. Ахальтен мар регионсенчен чылайăшĕ чăваш çĕрĕнчи АУОпа çыхăнса ĕçлес, партнер хутшăнăвĕсем йĕркелес килнине çирĕплетнĕ.

"ПРОДЭКСПО" вăхăтĕнче "Чи лайăх продукт-2014" конкурс та иртнĕ. Унта 500 ытла компани апат-çимĕçпе ĕçме-çиме 1500 тĕслĕхĕпе паллаштарнă. "Букет Чувашии" АУО конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе виçĕ шĕвекшĕн ылтăн медале тивĕçнĕ, çав шутрах – "Букет Чувашии "Домашний" квасшăн. Ку напиток, квасăн ытти сорчĕпе танлаштарсан, пылакрах тутăллă. Вăл ĕçес килнине тата ыврăннине ирттернипе пĕрлех кăмăлтуйăма çĕклет, вăй-хал хушать, ĕçлес туртăма пысăклатать, сывлăха та ырă витĕм кÿрет. Квасăн экологи сертификачĕ пур, çакă вăл сиенсĕррине çирĕплетет.

"Букет Чувашии "Домашний" квас Сочи хулинче 2013 çулта иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери XXII форумра та ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Çак мероприяти вăхăтĕнче йĕркеленĕ икĕ конкурсра "Букет Чувашии" 2 ылтăн медале тата Гран-прие тивĕçнĕ. Чи сумлă награднăна – Гран-прие – ун чухне "Ромашка-мята" салат нектарĕ" лимонад илнĕ. Ку нектарта нимĕнле консервант та çук. Ăна таса та пахалăхлă улма-çырлапа, тĕрлĕ курăкпа хутăштарса хатĕрлеççĕ, çавна май вăл техĕмĕпе тата тутлăлăхĕпе тыткăнлать.

"Букет Чувашии" АУО кăларакан продукци пĕтĕмпе 180 ытла наградăна тивĕçнĕ, çав шутран ытларахăшĕ – ылтăн медаль. Компани çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ туни ăнсăртран мар: вăл ăнăçлăн аталанса пырать, хальхи йышши оборудованипе усă курать, унта пысăк квалификациллĕ специалистсем ĕçлеççĕ, напитоксене паха чĕр тавартан тата классика технологийĕсене тĕпе хурса хатĕрлеççĕ.

■ **И.КЛЕМЕНТЬЕВА**

Реклама





МИНИСТЕРСТВО СЕЛЬСКОГО ХОЗЯЙСТВА РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ
РОССЕЛЬХОЗНАДЗОР
ДИПЛОМ
ЛАУРЕАТА
МЕЖДУНАРОДНОГО КОНКУРСА
«ЛУЧШИЙ ПРОДУКТ – 2014»
на 21-й международной выставке продуктов питания, напитков и сырья для их производства
«ПРОДЭКСПО – 2014»
10 - 14 февраля 2014 года
награждается
ЗОЛОТОЙ МЕДАЛЬЮ
ОАО «Чебоксарская пивоваренная фирма «Букет Чувашии»
Республика Чувашия
за пиво светлое «Пенное золото»;
«Букет Чувашии», Квас «Домашний»
Председатель Оргкомитета
Заместитель Руководителя
Россельхознадзора
А. Н. Саурин
МОСКВА

# Маларах çитĕнекенни – тупăшлăрах

***Куславкка районĕнчи Василий Семенов хресчен-фермер хуçалăхĕ юлашки çулсенче тухăçлă пахча çимĕç çитĕнтерсе пĕтĕм республикăна тĕлĕнтерет. Купăста уявĕ çинчен халĕ кÿршĕллĕ регионсенче те аван пĕлеççĕ. Пусă çаврăнăшĕнче çĕр улми те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать.***

– Василий Николаевич ир пулаканнине çитĕнтерсе пысăк опыт пухрĕ, – терĕ район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалисчĕ Алексей Андреев. – Çĕр улми туса илекен ял хуçалăх предприятийĕсем, хресчен-фермер хуçалăхĕсем юлашки çулсенчи çанталăк условийĕсене пăхмасăр кăçал та лаптăксене чакарасшăн мар – 850-900 гектартан кая пулмĕ.

Ял хуçалăх пайĕн ертсе пыракан специалисчĕпе Тамара Аликовăпа В.Семенов фермер хуçалăхне çитрĕмĕр. Василий Николаевич тунă çитĕнÿсемпе лăпланмасть: çĕнĕ проекта пурнăçа кĕртесшĕн, урăх отрасле те çул парасшăн. Çавăнпа хăйĕн хуçалăхне ывăлне Ивана шаннă. Ăслăлăх тата практика енчен ăна пулăшса пыратех паллах. Иван Васильевич – ĕç тăвакан тата тытăнакан фермер вырăнĕнче. Мускавра аслă пĕлÿ илнĕ, вĕреннĕ вăхăтра Красноярск крайĕнче практикăра пулнă.

Иван СССР арканнă хыççăнхи куçăмлă саманара çитĕннĕ çĕнĕ ăру çынни, çавăнпа пурнăç çине хăйне евĕр урăхла пăхать, çĕнĕлле шухăшлать. Çивĕч те витĕр ăслăскерпе калаçма питех те интереслĕ. «Малашне шăпах çакнашкал фермерсем кирлĕ», – шухăшлатăп ăшăмра.

– Атте хуçалăха 1999 çулта регистрацилерĕ. Ун чухне эпĕ саккăрта çеç пулнă, – аса илчĕ И.Семенов пулас çĕр ĕçченĕн шухăш-кăмăлĕ пĕчĕклех епле çирĕпленме тытăннине палăртса. – Василий Николаевич хуçалăха çулсерен епле аталантарса пынине сăнанăран, çак ĕçе вăй çитнĕ таран хам та хутшăннăран çĕр çинчех укçа тума пултарнине лайăх ăнлантăм. Хам тĕллĕн нухрат ĕçлесе илес килетчĕ.

Малтанах пуçласа яма йывăрччĕ, пурлăх никĕсĕ пулман. Трактор та, машина та çук. Ун чухне кредитсем паман-ха. Çавăнпа çынсенчен кивçен илеттĕмĕр. Кăштах та пулин тупăш илни савăнтаратчĕ, аталану çулĕ çине тăнине туяттăмăр.

Мускавран таврăннăранпа икĕ çул çитсе пырать, фермер ĕçне пĕчĕккĕн хăнăхатăп. Эпир халĕ производствăна урăхларах йĕркелеме тăрăшатпăр. Пирĕн тĕллев – çĕнĕ технологисемпе анлă усă курса сахал йышпах ĕç тухăçлăхне, продукци калăпăшне ÿстересси. Совет тапхăрĕнчи пек, 30-40 çул каяллахи евĕр ĕçлеме юрамастех.

Ашшĕ Василий Николаевич купăста çитĕнтерессипе тăрăшса ĕçленĕ. Иван Семенов вара çĕр улми отраслне аталантарасшăн, уйрăмах ир пулаканнине. Сăлтавĕсене усăмлатрĕ.

Иван Васильевич пĕлтĕр теплицăри пĕтĕм ĕçе хăй йĕркеленĕ. Купăста туса илесси кăткăс пулнине лайăх ăнланнă. Çын ытларах кирлĕ, тăкакĕ те нумайрах. Пĕтĕмпе тенĕ пекех алă вăйĕпе пурнăçламалла. Çум курăкпа хими препарачĕпе кĕрешме май килмест. «Иккĕмĕш çăкăр» пуссинче пачах урăхла: механизаципе анлă усă курма пулать.

Сорта суйлама пĕлмелле. Комбайн пулмасан юларах çитĕнекеннин лаптăкне пысăклатма кирлех-ши? Йĕпе-сапана пула инкек тÿсетĕн çеç. 2012, 2013 çулсенчи кĕре аса илерха. Нумай хуçалăх шар курчĕ.

– Çавăнпа та эпир хальлĕхе ир пулаканнине çеç лартатпăр. Ăна çанталăка кура утă уйăхĕн 7-13-мĕшĕсенче кăларма тытăнатпăр, 2-3 эрнере ĕçе вĕçлетпĕр. Мĕн енчен тивĕçтерет-ха пире çак çĕр улми? – тет çамрăк фермер. – Лайăх çанталăкра типĕ тухать. Хакĕ те пур. Хуçалăх кассине тупăш кĕрет. Ку таранччен Импала, Ред Скарлетт сортсемпе ĕçленĕ. Импала эрне маларах çитĕнет, анчах тухăçĕ пĕчĕкрех. Ред Скарлетт кăшт каярах пулса çитсен те тухăçĕпе савăнтарать. Малтан – пĕрне, унтан теприне кăларса пухнăран халăха кулленех ĕçпе тивĕçтеретпĕр. Малашне тата лайăхрах сортлă çĕр улми лартса пăхасшăн. Вĕсене сăнасах тăмалла.

Раççей Пĕтĕм тĕнчери сутуилÿ организацине кĕни И.Семенова та шухăшлаттарать. Пахалăхшăн кĕрешни, ăна лайăхлатсах пымалли тĕп вырăнта пулмаллине аса илтерсех тăрать вăл тет.

– Халăх халĕ пуянрах. Лавккара çимĕç килограмĕ 10 е 13 тенкĕ тăрсан та 3 тенке шута хумасть. Ĕлĕкрех йÿннине шыратчĕç, халĕ – пахараххине, тасараххине, шултрараххине, – тет Иван Васильевич. – Хамăрăн продукци лайăххине çирĕплетме «Семеновское» логотип тăвасшăн. Пур фермер та пĕрешкел технологипе çитĕнтермест вĕт, анчах пурин те рынокра хăйĕн пахча çимĕçне тупăшлă вырнаçтарас килет.

Хуçалăха ăнăçлă аталантарас тесен коллектив çирĕплĕхĕ, пĕр-пĕрне ăнланни, йĕркелĕх кирлĕ. Халăха чи малтан ертÿçĕн ырă тĕслĕх кăтартмалла. Çавăншăн тăрăшать те пуçаруллă та пултаруллăскер.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**



*● Тамара Аликова, Иван Семенов.*

Госслужба занятости Чувашии

# Ытти регионта кĕтеççĕ

Килĕшÿ çирĕплетнĕ тăрăх – граждансене республика тулашĕнче ĕçе вырнаçтараççĕ. Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службиасăннă тĕллевпе 19 килĕшÿ тунă, çав шутра Мускав хулин Ĕç тата халăх ĕçлевĕн департаменчĕпе тата Санкт-Петербург хулин Ĕç тата халăх ĕçлевĕн комитечĕпе тата ыттисемпе.

2014 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службиирĕклĕ çынсемпе ĕçсĕр граждансене вырнаçтармашкăн Раççей Федерацийĕн 4 регионĕпе икĕ енлĕ килĕшÿсем хатĕрленĕ, вĕсемпе килĕшÿллĕн 63 çынна ĕçлеме янă. 2014 çулта Чăваш Республикин тулашĕнче 1115 çынна вырнаçтармалла.

Кăçалхи нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕнче рабочисене Чул хула облаçĕнчи "Монтажэнерго" ОООна, Воронеж облаçĕнчи "Красинское" ОООна, Тула облаçĕнчи "Нива" ОООна, Мускав облаçĕнчи "Мосэнергострой" СПК" АУОна, Волгоград облаçĕнчи С.С.Петров тата С.В.Казаченко уйрăм предпринимательсем патне ĕçе вырнаçтармашкăн яма палăртаççĕ.

# Ют çĕр-шыв çыннисен вăйĕпе усă курасси

Пирĕн республикăра ют çĕр-шыв гражданĕсене вырнаçтарасси ытти патшалăхра пурăнакансене Чăваш хутлăхĕн территорийĕнче вăхăтлăх вырнаçас тĕллевпе ĕçлеме ирĕк панă квота тăрăх пурнăçа кĕрет. 2014 çулта ку кăтарту 1345 единицăпа танлашать, çав шутра 10-шĕ – йыхравланипе.

2014 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри 109 ĕçпе тивĕçтерекен патĕнче ют çĕр-шывăн 423 çынни вăй хунă.

Вĕсен пысăк пайĕ /46,2 процент/ туса кăларакан производствăра, 14,6 процент – курттăм тата вак суту-илÿре, 10,1-шĕ – строительствăра, 5,5-шĕ – ял тата вăрман хуçалăхĕсенче, 1,1-шĕ – транспортра, 22,5-шĕ ытти тытăмра тăрăшнă.

Ют çĕр-шыв гражданĕсен рабочи специальноçĕсене илес тĕк 15,8 проценчĕ – обрубщик, 13,2-шĕ – çĕвĕçĕ, 11,6-шĕ – тĕрлĕ ĕç тăвакан, 8,0-шĕ – повар, 4,5-шĕ – çăкăр пĕçерекен, 4,0-шĕ – формовщик, 2,4-шĕ – штукатур, 1,6-шĕ – çыхакан, 38,9-шĕ – ытти профессипе тата специальноçпе.

Тĕпрен илсен, миграци республикăри ĕç рынокĕнчи лару-тăрăва кÿрекен витĕм сисĕнсех каймасть.

*Специалист канашĕ*

# Выçлăхра вилĕмрен çăлнăскер...

***Паха çак çимĕçе халăх «иккĕмĕш çăкăр» тесе хисеплет. Тырă пулман çулсенче вăл час-часах сĕтел çинчи пĕртен пĕр апат шутланнă. Чăваш çĕр-шывĕнче çĕр аллă çул кăна ĕлĕкрех хĕнпе сарăлнăскер XX ĕмĕрте пирĕн халăха темиçе хутчен те выçăпа вилсе пĕтесрен сыхласа хăварнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи тата ун хыççăнхи йывăр çулсенче хресченсене пĕрлешÿллĕ хуçалăхра кунĕн-çĕрĕн вăй хурсан та тырă валеççе паман. «Иккĕмĕш çăкăрпах» çырлахнă вĕсем.***

Ăсчахсем сăнав ирттернĕ: менюра çĕр улмисĕр пуçне ытти çимĕçе тĕпрен катертнĕ. Çитĕннĕ çын унпа кăна чиперех пурăнма тата ĕçлеме пултарать иккен. Çакă унăн сывлăхĕшĕн нимĕн чухлĕ те сиенлĕ мар.

Çынсем тĕрлĕ апата кăмăллаççĕ. Пĕрисемшĕн ăшалани, теприсемшĕн пăшăхтарни, шывра е пăспа пĕçерни аван. Виççĕмĕшĕ кăмакара саралса шатăртатакан пулнине килĕштерет. Яшкара е шÿрпере ирĕлсе нимĕрленни çимĕçре крахмал ытлашши пулнине пĕлтерет.

Çĕр улмире тутлăхлă тĕп япала – крахмал. Сорта, тăпрана, хăш вăхăтра пухса кĕртнине кура унăн виçи 11-тен 23 процента çитет. Крахмал шайне ÿстерме вăрлăха лайăх калчалантарни, иртерех лартни, çеçкисем типсе тăкăнсан çеç кăларни пулăшать. Азот, тислĕк виçерен нумайрах хывни, юларах лартса иртерех кăларни, тăпра ытла нÿрĕ пулни унăн шайне чакараççĕ çеç.

Çакна шута илĕр: çитĕнсе çитмен çимĕçе пухса кĕртнĕ май сахалрах усă кÿрекен япаласен шучĕ, çавăн пекех нитратсен кăтартăвĕ те ÿсет. Çав вăхăтрах паха йышши тытăмсем палăрмаллах сахалланаççĕ. Çавăнпа «иккĕмĕш çăкăра» пулса çитмесĕр кăларма ан васкăр.

Çĕр улми – С витаминпа тивĕçтерекен тĕп çимĕç. Унăн çитĕннĕ çынна кирлĕ чухлĕ виçе талăкра 300 грамм çĕр улми çинипе танлашать. Анчах çак витамин шывра ирĕлет, пысăк пайĕ пĕçернĕ чухне шывра саланать. Шуратмасăр пĕçерни усăллăрах. Витамин виçи сорт уйрăмлăхĕнчен, калăпăшран та килет. Вăтам виçеллинче /80-120 грамм/ ытларах. Питĕ шултра /200 грамран иртет/, вĕтĕ /30 грамран çăмăлрах/ пулсан крахмал та, витаминсем те сахалрах. Тăсăк хурăмлисем çавракисенчен пахарах. 100 грамм çимĕçре С витамин, чĕрĕ виçепе шутласан, 15-25 миллиграма çитет. Вăл Розара, Лазурит, Никулинский, Петербургский, Чародей, Мастер, Пушкинец, Романо, Бронницкий, Марс сортсенче нумайрах.

В ушкăнри витаминсем те шывра ирĕлеççĕ. Вĕсем типĕ япаласемпе пуян çимĕçре ытларах, шываклинче – сахалрах.

А витамина тепĕр тĕрлĕ каротин теççĕ. Вăл шывра ирĕлмест, анчах çура шăранать. Апата ÿсен-тăран е выльăхчĕрлĕх çăвĕпе хатĕрлесен лайăхрах. Каротин виçи çĕр улми тĕсĕпе çыхăннă. Сарă-кĕрен ăшлин вăл нумайрах, шуррин – сахалрах. А витаминпа Спарта, Виза, Бронницкий, Мастер, Розара, Чайка, Петербургский, Лазурит, Вятски, Лилея Белорусская сортсем пуян.

«Иккĕмĕш çăкăрта» витамин, крахмал, белок ытларах пулччăр тесен ÿсен-тăрана лайăх, анчах виçеллĕ апатлантармалла, хурт-кăпшанкăпа, чирчĕрпе кĕрешмелле, тăпрана çу каçипех кăпăшка тытмалла. Крахмал, типĕ япаласем ытларах çимĕçĕн тути аван. Вăл лайăх упранать. Шываклин тути çук, çĕрес хăрушлăх пысăк.

Аслă ăрурисем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи умĕнхи тата вăл вăхăтри çулсенче Вольтман сорт тĕлĕнмелле тутлă пулнине ас тăваççех пулĕ. Унăн крахмаллăхĕ 20 процентран та иртнĕ, типĕ япаласем – 25%.

Вун-вун çул каялла Лорх питĕ хисепреччĕ, крахмал шайĕ 17% пулнă. Шел, ăна та, Вольтмана та рака парăннăран çĕр-шывĕпех çитĕнтерме пăрахрĕç. Юлашки çулсенче Лорха Тутарстан ытларах çитĕнтерет. Ăна Хусанпа Пенза ял хуçалăх ăслăлăх-тĕпчев институчĕсем вирусемсĕр ĕрчетеççĕ.

Çимĕçĕн тăпăрлăхĕ сортран нумай килет. Удача, Голубизна шултрарах пĕрчĕллĕ крахмаллă пулнăран лайăх пиçеççĕ, саланаççĕ.

Апат-çимĕç хатĕрлемелли чĕр тавар пахалăхне нитратсем, йывăр металсем пурри чакарать. Тислĕк, пĕрчĕллĕ удобрени виçеллĕ сапакан уйра нитрат шайĕ шăпах кирлĕ чухлĕ. Иртерех çитĕнекен сортсенче /Пушкинец, Лазурит, Удача, Розара, Снегирь/ унăн шайĕ юларах пулаканнисенчен сахалрах. Йывăр металл тăварĕсем вара ытларах аслă çулсен çывăхĕнчи лаптăксенче пухăнаççĕ.

Сортсен уйрăмлăхне палăртмалла. Ир пулаканнисенчен чи техĕмли – Пушкинец. Удача хăвăрт тухăç пама тытăнать, кĕрчченех ешĕл çулçăллă. Авăн уйăхĕнче пухса кĕртсен те пысăк тухăçлă.

Чародей пулăхлă тăпрана кăмăллать, питĕ тухăçлă, пĕр тĕмрен 20 ытла çимĕç тухать. Елизавета, Марс, Чародей, Невский сортсене çанталăк пăсăличчен çурла уйăхĕнче кăларса пухма юрать.

Тасатнă чухне куç лакăмĕн тарăнăшĕ пĕлтерĕшлĕ. Голубизна, Елизавета, Мастер, Невский, Олимп, Никулинский, Пушкинец, Розара, Снегирь, Удача, Чародей ăшăх куçлă, каяшĕ сахалрах. Бронницкий, Спарта, Виза сортсен куçĕсем тарăнрах.

Чуллă, извеçленĕ тăпрара кĕсен чирĕ аталанать. Унпа кĕрешме ешĕл удобрени пулăшать. Рапс акма сĕнетĕп, пĕр гектар лаптăка 6-10 кг вăрлăх çителĕклĕ.

Нематода чир пирки те каламаллах. Сиенленнĕ çĕр улми ăшĕнче куçа курăнман вĕтĕ хуртсем ĕрчеççĕ. Çимĕç туни вăхăтсăр саралса типет. Беллароза, Вдохновение, Виза, Гранат, Жуковский ранний, Импала, Лазурит, Ред Леди, Скарлетт, Розара, Рябинушка чире парăнмаççĕ.

■ **Юрий КАЗАНКОВ,**
**агроном, ял хуçалăх аслăлăхĕсен кандидачĕ**

# Çĕнтерÿçĕсене – 1 млн тенкĕ

***Ял тăрăхĕн хăтлăлăхĕшĕн, тасалăхĕшĕн тăрăшасси – унăн пуçлăхĕн пĕрремĕш тивĕçĕ. Енчен уншăн укçа парса хавхалантараççĕ тăк – унта пурăнакан кашни çыннăн. Паллах, ăна тивĕçес тесессĕн республика конкурсĕнче çĕнтермелле.***

Чăваш Республикин Строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви пĕлтĕрхи «Чăваш Енĕн чи тирпейлĕ ял /хула/ тăрăхĕ» конкурса пĕтĕмлетнĕ, ăна Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ.

Конкурса пĕтĕмлетнĕ чухне вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх аталанăвĕпе, муниципалитет йĕркеленĕвĕн хăтлăхĕн шайне ÿстерессишĕн мĕнле ĕçленине, ятарлă программăсене пурнăçа кĕртнине, экологи тăрăмне пăхăннине тата ыттине шута илнĕ.

Территорири пурăнакан çынсен шутне тĕпе хурса муниципалитетсене тăватă ушкăна уйăрнă. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисене конкурсăн малтанхи тапхăрне хутшăнтарман. 2013 çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе тупăшăвĕн тĕрлĕ номинацийĕнче Вăрнар районĕнчи Вăрнар хула, Шупашкар районĕнчи Кÿкеç тата Вăрмар районĕнчи Чупай ял тăрăхĕсем çĕнтернĕ тесе йышăннă, вĕсене Пĕтĕм Раççейри конкурса хутшăнма сĕннĕ. Çĕнтерÿçĕсене хавхалантарма республика бюджетĕнчен 1 млн тенкĕ уйăрнă.

**Ю.СТЕПАНОВ.**

# Курав шухăшлама вĕрентет

***Мускавра пĕтĕм Раççейри «AgroFarm-2014» курав иртнĕ.***

Унта «Агро-Инновацисем» ХУП специалисчĕсем, «Путь Ильича» /Муркаш/, «Победа», «Энтепе» /Елчĕк/, Ленин ячĕллĕ /Шупашкар районĕ/ хуçалăхсен, ытти предприяти ертÿçисем хутшăннă. 380 ытла организаци ăратлă ĕне выльăх, кайăк-кĕшĕк кăтартнă. Унпа Чăваш Ен делегацийĕ кăсăкланса паллашнă. Владимир облаçĕнчи Рождествено ялĕнчи ăратлă выльăх ĕрчетекен тата паха вăрлăх туса илекен Ленин ячĕллĕ обществăна çитсе курнă. Кунта хура-ула ĕне кăна 1800 пуç. 2011 çулта темиçе уйăхри 1000 пăру валли, 2012 çулта ĕне тума хатĕрлекен 700 тына усрамалли комплекссем, тырă типĕтмелли КЗС хута янă. Трактор-машина юсавăшне, администраци çуртне ĕçе кĕртнĕ.

Ял хуçалăх культурисене туса илмелли, пухса кĕртмелли техникăн мĕн пур хатĕрне çĕнетнĕ. Чи тĕлĕнтерекенни: вăйлă хуçалăха хĕрарăм – Наталья Ершова – ертсе пырать. Хальлĕхе пирĕн арçын ертÿçĕсем чи нумай 500-шер ĕне тытаççĕ.

**Ю.МИХАЙЛОВ.**




*Тĕслĕх*

# Пĕчĕк заводӑн пысӑк ҫитĕнĕвĕсем

**Вӑрнарти хими завочĕ /халĕ – "Август" фирма/ 1930 ҫулта ĕҫleme пуҫланӑ. Ҫав тапхӑртанпах предприятире физкультурӑпа спорт юхӑмĕ вӑй илме тытӑннӑ. Паян завод ĕҫченĕсем ĕҫ кӑтартӑвĕсемпе кӑна мар, спортри ҫитĕнӳсемпе те мухтанма пултараҫҫĕ.**



### Спортсӑр – пĕр кун та

Ҫапларах каланӑ пулӑттӑм заводӑн кун-ҫулĕпе паллашнӑ хыҫҫӑн. Унта ĕҫлекенсенчен чылайӑшĕ спортпа туслӑ пулнӑ, сывӑ пурнӑҫ йĕркине тытса пынӑ. Ҫак тĕллевпех предприятире ертӳҫĕсем секци е кружок йĕркелеме майсем туса панӑ. Малтанхи ҫулсенчех завод спортсменĕсем районта иртекен ӑмӑртусенче ҫитĕнӳсемпе палӑрнӑ. Акӑ 1938-1941 ҫулсенче йĕлтĕрпе чупса тата гимнастика енĕпе спорт нормативне 11 ҫын тултарнӑ. В.Григорьев инженер поселокра иртнĕ шахматистсен чемпионатĕнче иккĕмĕш вырӑн йышӑннӑ. 1950 ҫулта волейболистсем районӑн куҫса ҫӳрекен кубокне ҫĕнсе илнĕ, йĕлтĕрҫĕсен команди те пысӑк парнесĕр юлман. XX ĕмĕр варринчех заводра конькипе чупакансен секцийĕ уҫӑлнӑ, унтах ҫĕршыв ӑмӑртӑвĕсен ҫĕнтерӳҫисем Н.Гамаюнов, Г.Алексеев, Е.Абашева ӑсталӑха туптанӑ. 1962 ҫулта ишевҫĕсем республика турнирĕнче мала тухнӑ, ҫавӑнтанпа вĕсем темиҫе хутчен пĕрремĕш пулнӑ. Завод хоккеисчĕсем район чысне Чӑваш Ен ӑмӑртӑвĕсенче пĕрре мар хӳтĕленĕ. Йывӑр атлетика, сĕтелҫи теннис, футбол, пӑшалтан пересси тата ытти енĕпе палӑрнӑ "Химиксем".

1950 ҫулта завод директорĕ Георгий Чуприн тӑрӑшнипе "Труд" /халĕ – "Химик"/ стадион хута кайнӑ. Хальхи вӑхӑтра унта – 600 ҫын лармалӑх вырӑн пур. Ҫулла футбол уйĕнче, волейболла, баскетболла тата теннисла вылямалли лапамсенче, ача-пӑча площадкинче ҫын татӑлмасть. Хĕлле стадионта йĕлтĕрпе тата конькипе ярӑнма юратакансем валли ятарлӑ трассӑпа каток ĕҫлет. Кашни ҫул "Химикре" район тата республика шайĕнчи ӑмӑртусем иртеҫҫĕ, унта фирма спартакиадисене йĕркелесси йӑлана кĕнĕ. 2005 ҫулта стадион ҫумĕнче спорт керменĕ ҫĕкленсе ларнӑ. Икĕ ҫул каяллa спортсменсем валли ӑшӑ пӳлĕмсем янтӑланӑ, йывӑр атлетикӑпа кӑсӑкланакансем валли снарядсем вырнаҫтарнӑ. Пĕтĕмпех заводӑн укҫи-тенкипе: спорта аталантармашкӑн предприяти ҫулталӑкра 5 млн яхӑн тӑкаклать.

2004 ҫул Вӑрнарсемшĕн пĕлтерĕшлĕ тепĕр пулӑмпа палӑрса юлнӑ: "Химик" спорт клубĕ йĕркеленнĕ. Унӑн ертӳҫи пулма заводра 1991 ҫултанпа ĕҫлекен, спорта чунтан парӑннӑ Евгений Захарова ҫирĕплетнĕ. Футболпа, волейболпа тата баскетболпа туслӑскер ЧР физкультурӑпа спортӑн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ ятне тивĕҫнĕ. Евгений Анатольевич пĕлтернĕ тӑрӑх спорт клубĕнче 5 секци ĕҫлет. Йывӑр атлетика ушкӑнĕсенче /тренерĕ Юрий Агилов/ 12 ҫултан аслӑрах яшсемпе арҫынсем ӳт-пĕве ҫирĕплетеҫҫĕ. Спорт аэробикин секцине Елена Аликова ертсе пырать, фитнес-аэробика хуҫи – Ирина Куркина. Унта 14-65 ҫулсенчи хĕрсемпе хĕрарӑмсем ҫӳреҫҫĕ. Каратэпе туслисем кашни кун Алексей Владимиров тренер патне васкаҫҫĕ. Кӑҫал 10 ҫулхи юбилейне паллӑ тӑвакан организаци тӑрӑшнипе Вӑрнарта спортпа туслашакансен тата сывӑ пурнӑҫ йĕркине пӑхӑнакансен йышĕ ҫултан ҫул ӳссе пырать, уйрӑмах футболпа кӑсӑкланакан нумай.

### "Химиксем" футболла выляҫҫĕ

Завод ĕҫченĕсем футбол енĕпе палӑрасси "Фосфорит" команда йĕркеленнинчен пуҫланнӑ. Каярах спортсменсем район тата республика ӑмӑртӑвĕсене хутшӑнма тытӑннӑ. 1950-1960 ҫулсенче завод команди уйрӑмах пысӑк ҫитĕнӳсемпе палӑрнӑ: ҫав тапхӑрта районти турнирсенче куҫса ҫӳрекен кубока темиҫе хут та ҫĕнсе илнĕ. Ун чухне команда чысне хӳтĕленĕ В.Фролов /капитан/, Н.Галкин, Л.Емельянов, Ю.Войтенко, Г.Алексеев тата ыттисем ӑмӑртусенче хӑйсен ӑсталӑхĕпе пурне те тĕлĕнтернĕ.

Хальхи вӑхӑтра республика тата ҫĕр-шыв шайĕнчи ӑмӑртусенче "Химик-Август" футболисчĕсем хастар. Вĕсем Чӑваш Ен чемпионатĕнче 3 хут ҫĕнтернĕ, 14 хут кĕмĕл призер пулнӑ, республика кубокне 8 хут ҫĕнсе илнĕ. Вӑрнар каччисем Антон Ефимов, Артем Бычков, Роман Шалин, Дмитрий Терентьев республикӑн пĕрлештернĕ командишĕн выляҫҫĕ, иртнĕ ҫул "Чӑваш Ен - ДЮСШ" Раҫҫей ӑмӑртӑвĕн виҫҫĕмĕш дивизионĕнче виҫҫĕмĕш вырӑн йышӑнчĕ.

2002 ҫултанпа футбол секцине ачасене йышӑнма тытӑннӑ. Халĕ спорт клубĕнче 5 команда, унта 120 яш ӑсталӑхне туптать. Вĕсемпе пултаруллӑ тренер Александр Строганов пĕтĕм вӑй-халĕпе чунне парса ĕҫлет, Ҫĕмĕрле тӑрӑхĕнче пурӑнаканскер кашни кун Вӑрнара ӳркенмесĕр ҫӳрет. Пĕлтĕр акӑ футбол уйрӑмне 9-10 ҫулсенчи тепĕр 38 ачана илнине пĕлтерчĕ Евгений Анатольевич. Пĕтĕм Раҫҫейри "Пучах" ял вӑййисенче ачасен коллективĕсем кашни ҫул малти вырӑнсене тухаҫҫĕ, Хусанта иртекен ӑмӑртусенчен медальсемпе таврӑнаҫҫĕ. 1998-1999 ҫулсенче ҫуралнӑ яшсен команди пĕлтĕр ҫĕр-шыв ӑмӑртӑвĕн бронза призерĕ, республикӑра пĕрремĕш пулнӑ.

Чӑваш Енре йĕркелекен пĕр ӑмӑртуран та юлманскерсем мини-футбол енĕпе те палӑраҫҫĕ. Пĕлтĕр, калӑпӑр, ача-пӑча командисем республика чемпионатĕнче 8 наградӑран 6-шне ҫĕнсе илнĕ. Вӑрнар футболисчĕсен, чӑн та, ҫитĕнĕвĕсем пĕчĕк мар. Спорт клубĕн ертӳҫисене пĕр ыйту канӑҫ памасть – тренерсем ҫитменни. Темиҫе ушкӑнпа пĕр ҫыннӑн ĕҫлеме ҫӑмӑл мар паллах. Ҫавӑнпа вĕсем пултаруллӑ тепĕр вĕрентекене хапӑлласах кĕтсе илĕҫ. Ун чухне "Химик-Августӑн" ҫитĕнĕвĕсем татах ӳсĕҫ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

# Ишевҫĕсенчен – пĕрремĕш



**Вӑрмарти Г.Е.Егоров ячĕллĕ пĕрремĕш вӑтам шкулта вĕренекен Иван Голубев шывра ишме кӑмӑллать. 2009 ҫулта поселокра «Илем» физкультурӑпа спорт комплексне уҫнӑшӑн питĕ савӑннӑ шкул ачи. Шывра ишекенсен секцине те чи малтан ҫыраннӑ.**

Игорь Алешин тренер вĕрентнипе спортри ӑсталӑхне ӳстерекенскер пĕрремĕш хут ӑмӑртӑва хутшӑнни халĕ те асрах. Кӳкеҫ поселокĕнчи «Улӑп» физкультурӑпа спорт керменĕнче ЧР Президенчĕн кубокне ҫĕнсе илессишĕн иртнĕ ӑмӑртура 50 метрлӑ дистанцие 33.72 ҫеккунтра вĕҫлет. Ҫĕмĕрлери «Олимп» сывлӑх керменĕнче иртнĕ чемпионатра хӑйĕн кӑтартӑвне татах лайӑхлатать: ирĕклĕ мелпе ишсе пĕрремĕш вырӑн йышӑнать, 50 тата 100 метрлӑ дистанцисенче «кĕмĕл» ҫĕнсе илет.

Ҫамрӑк ишевҫĕн 2012 ҫулхи кӑтартӑвĕсем те савӑнтараҫҫĕ. Республикӑри «Кӑвак хум» фестивалĕн виҫҫĕмĕш тапхӑрти ӑмӑртӑвĕсенче /Вӑрмар поселокĕ, «Илем» комплекс/ пирĕн ентеш ҫĕнтерӳҫĕ ятне тивĕҫнĕ. Ун хыҫҫӑн Йошкар-Олара иртнĕ «Ҫурхи тумлам» турнирта хисеп пьедесталĕн чи ҫӳллĕ картлашки ҫине хӑпарнӑ.

Иртнĕ ҫул та чылай ӑмӑртура палӑрнӑ. Нарӑс уйӑхĕнче районти «Илем» физкультурӑпа спорт комплексĕнче спортӑн тĕнче класлӑ мастерĕн А.Вороновӑн парнисене ҫĕнсе илессишĕн уҫӑ турнир иртнĕ. Ҫивĕч кĕрешӳре Ваня Голубев чемпион ятне ҫĕнсе илнĕ.

Пултаруллӑ ҫамрӑк ака уйӑхĕнче Санкт-Петербургра иртнĕ Пĕтĕм Раҫҫейри «Савӑнӑҫлӑ дельфин» фестивальте лайӑх кӑтартупа палӑрнӑ. Ун хыҫҫӑн Улатӑрта иртнĕ «Ҫĕнтерӳ ҫӑлтӑрĕсем» турнирта та ҫĕнтерӳҫĕ ятне тивĕҫнĕ, республика чемпионатĕнче кĕмĕл виҫĕ медаль ҫĕнсе илнĕ.

Олимп вӑййисен чемпионĕн Александр Поповӑн парнисене ҫĕнсе илессишĕн Екатеринбургра иртнĕ Пĕтĕм Раҫҫейри ӑмӑрту та Ваньӑшӑн пĕлтерĕшлĕ пулнӑ. Раҫҫей Федерацийĕн 56 субъектĕнчи, ҫавӑн пекех Германи, Каталони, Франци ҫĕр-шывĕсенчи чи вӑйлӑ ишевҫĕсемпе тупӑшнӑ. Ҫакӑ пултаруллӑ ишевҫе пĕрре те шиклентермен. Ҫивĕч кĕрешӳре вӑл хӑйне хӑюллӑн тытнӑ. 100 метрлӑ дистанцире ирĕклĕ мелпе ишес енĕпе 36-мĕш, баттерфляй мелĕпе ишсе 15-мĕш вырӑнсене йышӑннӑ пулин те спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне пурнӑҫланӑ. «Илем» физкультурӑпа спорт комплексне ҫӳрекен ҫамрӑк ишевҫĕсенчен ҫак ята тивĕҫнĕ пĕрремĕш ҫамрӑк вӑл.

■ **Анатолий ХОВАНСКИЙ**

*Спорт хроники*

## Каратэ

Чӑваш Енĕн 12-15 ҫулсенчи спортсменĕсем федерацин Атӑлҫи округĕн ӑмӑртӑвĕнчен 10 медальпе таврӑннӑ. Унӑн пĕтĕмлетĕвĕпе ҫамрӑк каратистсен команди иккĕмĕш вырӑн йышӑннӑ. Чи пысӑк наградӑна хӑйсен виҫисенче Елена Зайковская, Даниил Питеров тата Анна Давыдова ҫĕнсе илнĕ. 12-ри Эдуард Тябов ӑсталӑхпа палӑрса турнирӑн ятарлӑ парнине те тивĕҫнĕ. Даниил Русановпа Полина Мухановӑн – "кĕмĕл", тепĕр 4 спортсменӑн "бронза".

## Сӑнӑ ывӑтасси

Краснодарта РФ физкультурӑн тава тивĕҫлĕ ĕҫченне Анатолий Лунева асӑнса Пĕтĕм Раҫҫей турнирĕ иртнĕ. Унта Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлӑ 1-мĕш спорт шкулĕнче ЧР тава тивĕҫлĕ тренерĕ Анатолий Прохоров патĕнче ӑсталӑха туптакансем вӑй виҫнĕ. Марина Максимова хĕрарӑмсен ушкӑнĕнче иккĕмĕш кӑтартупа палӑрнӑ. 22-ри Анна Ерошина 46,87 метр ывӑтса виҫҫĕмĕш вырӑн йышӑннӑ. Анна Мамлинӑпа Татьяна Егорова пьедестал ҫине хӑпарайман пулин те чи лайӑх 10 спортсмен йышне кĕнĕ.

## Баскетбол

"КЭС-БАСКЕТ" баскетбол лигин республика чемпионачĕн финалне 8 шкул команди хутшӑннӑ. Ӑмӑрту Шупашкарти "Спартак" физкультурӑпа спорт керменĕнче иртнĕ. Хĕрсен ушкӑнĕнче чи пысӑк парнене Ҫĕнĕ Шупашкарти 4-мĕш шкул пикисем ҫĕнсе илнĕ, Сĕнтĕрвӑрри районĕнчи Кукашни шкулĕпе Ҫĕмĕрлери 8-мĕш гимнази командисем – призерсем. Яшсен тупӑшӑвĕнче Шупашкарти 3-мĕш лицей ҫĕнтернĕ, Ҫĕнĕ Шупашкарти 18-мĕш тата Улатӑрти 7-мĕш шкулсенче вĕренекенсем иккĕмĕшпе виҫҫĕмĕш вырӑнсене йышӑннӑ.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

*Мини-футбол*

# Хӳтĕлевҫĕ кунне халалларĕҫ

**Ҫамрӑксене сывӑ пурнӑҫ йĕркине хӑнӑхтарас, киревсĕр йӑласенчен хӑтарас тĕллевпе Шупашкарти техникумсенче кашни уйӑхра мини-футбол турнирĕсем йĕркелес шухӑша ҫамрӑк спортсменсемпе вĕсен тренерĕсем ырласа йышӑнчĕҫ.**



Нарӑс уйӑхĕнче "Текстильмаш" спорт залĕнче иртнĕ черетлĕ ӑмӑртӑва футболистсем Ҫĕр-шыв хӳтĕлевҫин кунне халалларĕҫ. Финалта 4 команда тупӑшрĕ: Шупашкарти механика-технологи техникумĕ, электромеханика колледжĕ, транспортпа строительство технологийĕсен техникумĕ... Чылай очко пухса ҫĕнтерӳҫĕ ятне хулари машиностроени техникумĕ тивĕҫрĕ. Команда чысне 11 студент хӳтĕлерĕ /тренерĕ – Григорий Михайлов/. Чи лайӑх спортсменсене Александр Григорьева, Дмитрий Матвеева, Дмитрий Иванова тата Никита Владимирова ятарлӑ парнесемпе хавхалантарчĕҫ. Мала тухнӑ командӑна турнира пуҫарса янӑ пултаруллӑ футболист тата тренер Николай Платонов кубокпа чысларĕ.

■ **Н.СИРЕНЕВ**

*Сочи – 2014*

# Хамӑрӑннисемшĕн хавхаланатпӑр

**Тĕнчери чи вӑйлӑ спортсменсен тупӑшӑвĕсене куҫ илмесĕр сӑнатпӑр. Паллах, хамӑрӑннисемшĕн уйрӑмах хавхаланатпӑр: вĕсем пĕр-пĕр ӑмӑртура ҫĕнтерсен савӑнатпӑр, мала тухаймасан пӑшӑрханатпӑр. Ют ҫĕр-шыв атлечĕсен хастарлӑхĕ вара тĕлĕнтерет: акӑ Беларуҫ биатлонҫи Дарья Домрачева тĕрлĕ стартра виҫĕ ылтӑн ҫĕнсе илме пултарчĕ.**



● *Александр Зубковпа Алексей Воевода.*

Раҫҫей спортсменĕсем те ыттисенчен юласшӑн мар. Ку эрне те ӑнӑҫлӑ пуҫланчĕ: бобслейҫӑсем пухмача "ылтӑнпа" пуянлатрĕҫ. Хальлĕхе Раҫҫей командин 5 чи пысӑк награда, вĕсен йышĕ ӳсессе шанатпӑр. Пиллĕкмĕш "ылтӑн" хуҫисем – Александр Зубковпа Алексей Воевода. Пирвайхи стартсенчех малта пыракансем тĕнчери чи вӑйлӑ бобслейҫӑсене кая хӑварса пĕрремĕш вырӑна тухрĕҫ. Иртнĕ Олимпиадӑра виҫҫĕмĕш кӑтартупа палӑрнӑскерсем пĕрремĕш хут чемпион ятне тивĕҫрĕҫ.

Ҫав кунах фигуристсем ҫĕршыва "бронза" парнелерĕҫ. 20 ҫулти Елена Ильиныхпа 23-ри Никита Кацалапов пӑр ҫинче ташлас енĕпе пултарулӑх кӑтартрĕҫ. Вĕсем командӑсен турнирĕнче "ылтӑн" ҫĕнсе илнĕччĕ. РФ спорт мастерĕ Николай Олюнин ытлари кун сноубордистсен чупӑвĕнче иккĕмĕш вырӑн йышӑнчĕ.

Раҫҫей команди хальлĕхе пиллĕкмĕш вырӑнта /19 медаль/. Олимп вӑййисем вĕҫлениччен шутлӑ кунсем юлчĕҫ, ҫак тапхӑрта пирĕннисем лайӑх кӑтартусемпе савӑнтарасса шанас килет.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

*Акци*

# Олимп ҫулӑмĕ ҫул ҫӳревре

**Хальхи вӑхӑтра чылай ял-хулара Олимп ҫулӑмĕн эстафетисем иртеҫҫĕ. Ҫак тĕллевпе пирĕн республикӑра "Олимпиадӑпа ҫывӑхлан" акци пуҫарнӑ. Кӑрлач уйӑхĕн малтанхи кунĕсенчех пуҫланнӑскере кашни районта йĕркелеҫҫĕ.**



Аса илтеретпĕр: Олимп ҫулӑмĕн эстафети Шупашкарта раштав уйӑхĕн 27-мĕшĕнче иртрĕ. Пин-пин ҫынна ҫĕкленӳллĕ кӑмӑл-туйӑм, хавхаланулӑ шухӑш-ĕмĕт парнелерĕ, Чӑваш Ене тĕнчери чи пысӑк ӑмӑртупа пĕр тĕвве ҫыхӑнтарчĕ. Республикӑри паллӑ спортсменсемпе тренерсем, культура ĕҫченĕсемпе ӳнер ӑстисем, ветерансемпе студентсем, спортпа туслисемпе сывӑ пурнӑҫ йĕркине пӑхӑнакансем – пурĕ 163 ҫын – Олимп ҫулӑмне хула урамĕсемпе йӑтса тухрĕҫ. "Олимпийский" стадионта лазер-шоупа тата чуна тыткӑнлакан фейерверкпа тĕлĕнтернĕ чаплӑ самант паян та кашнин асĕнчех.

Олимп ҫулӑмĕн паянхи ҫул ҫӳревĕ – ҫак уявӑн тӑсӑмĕ. Республикӑри паллӑ спортсменсемпе тренерсем хӑйсен тӑван тӑрӑхĕсене ҫитсе шкулпа садик ачисене, ҫамрӑк атлетсемпе вĕсен вĕрентекенĕсене ҫулӑм паллипе паллаштараҫҫĕ, хӑйсен кун-ҫулĕпе ҫитĕнĕвĕсем ҫинчен каласа параҫҫĕ. "Олимпиадӑпа ҫывӑхлан" уйӑхлӑха Ҫĕмĕрлери 3-мĕш вӑтам шкулта ирхи зарядкӑран пуҫланӑ. Зарядкӑна вара ҫак шкултах вĕренекен Ольга Севастьянова ирттернĕ. Мĕншĕн тивĕҫнĕ-ха вӑл ҫак чыса? 8-мĕш класра вĕренекенскер ишевҫĕсемпе ҫӑмӑл атлетсен республикӑри тата ҫĕр-шыври турнирĕсенчен пĕрре мар медальпе таврӑннӑ, ҫавӑнпа вӑл хӑйĕнчен кĕҫĕнреххисене спортпа туслашма чĕнет.

Кӑрлач уйӑхĕн юлашки кунĕсенче Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлӑ 7-мĕш спорт шкулĕн директорĕ Валерий Мулендеев хулари 200-мĕш садикре пулнӑ. Республикӑри тĕп велосипедҫӑ ачасем патне пушӑ алӑпа пыман: пĕчĕкскерсем Олимп символне курсан ҫав тери савӑннӑ, хӑвӑртрах тытса пӑхма васканӑ. Валерий Андреевич ачасене паллӑ спортсменсем ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

"Шупашкар пĕр кунлӑха Олимп вӑййисен тĕп хули пулса тӑчĕ. Ҫавӑнпа кашни хӑйне эпĕ Олимпиадӑн пĕр пайĕ теме пултартӑр. Чӑваш Енре пурӑнакансене тĕнчери чи пысӑк ӑмӑртупа ҫывӑхлатас тĕллевпе ятарлӑ акци пуҫартӑмӑр: пурте факел тытса курччӑр", – тенĕччĕ пĕр тĕл пулура ЧР физкультурӑпа спорт министрĕ Сергей Мельников. Ҫавӑн пекех вӑл Олимп ҫулӑмĕн паллине шкулти музейсенче упрамаллине пĕлтернĕччĕ. Акӑ РФ тава тивĕҫлĕ тренерĕ Михаил Кузнецов факела Ҫĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен 3-мĕш спорт шкулне парнеленĕ. РФ спортӑн тава тивĕҫлĕ мастерĕ, Олимп вӑййисене икĕ хут хутшӑннӑ Светлана Захарова та тӑван шкулĕн /Вӑрмар районĕнчи Энĕшпуҫ ялĕ/ музейне чаплӑ экспонатпа пуянлатнӑ.

Ҫĕрпӳ районĕнче Олимп ҫулӑмĕн уявĕ "Йĕлтĕр йĕрĕ" ӑмӑртупа пĕр кун иртнĕ. Йĕлтĕрҫĕсем старта тухиччен ҫулӑм чашӑкне чĕртнĕ, ҫак чыса Раҫҫей спорт мастерĕ, тĕнче чемпионĕ, паллӑ биатлонҫӑ Павел Магазеев тивĕҫнĕ. Олимпиадӑна халалласа Ҫĕрпӳ тӑрӑхĕнчи вĕренӳпе культура учрежденийĕсенче ӑмӑртусемпе сывлӑх кунĕсем, спортпа патриотлӑх акцийĕсем, фестиваль-конкурс, библиомарафонсем йĕркеленĕ. Улатӑр районĕнче те Олимп ҫулӑмне хавхаланса кĕтсе илнĕ. Савӑнӑҫлӑ мероприятисенче шкул ачисем спортсменсене илемлĕ юрӑ-ташӑпа, хаваслӑ сӑвӑкулӑпа савӑнтарнӑ, сӑн ӳкерĕнме те манман. Тĕнче чемпионĕн, Олимп вӑййисен кĕмĕл призерĕн А.Кедяровӑн тӑван ялĕнче те – Алтышево салинче – чаплӑ уяв иртнĕ...

Олимп ҫулӑмĕн ҫул ҫӳревĕ вĕҫленмен-ха, Сочире те хĕрӳ тупӑшу пырать. Апла тӑк – эсир те Олимп символĕпе курнӑҫма кая юлман.

■ **Андрей ПЕТРОВ**

# Ҫамрӑк ӑру патвар ҫитĕнтĕр

**Шӑмӑршӑ районĕнчи Чаткас – паллӑ ял. Кунта мĕн авалтанах тӑрӑшуллӑ та харсӑр ҫынсем пурӑнаҫҫĕ. Нумайӑшĕ ĕҫ-хĕлĕнче пысӑк ҫитĕнӳсемпе палӑрнӑ, чуна ҫывӑх ырӑ юхӑм пуҫарнӑ.**



2011 ҫулта Мускав стройкисенче ӑнӑҫлӑ ĕҫлекен Чаткас ҫыннисем тӑван ялти ҫамрӑк спортсменсене кавир парнеленĕ. Вĕсенчен пĕри, Олег Еремеев, кунпа ҫеҫ ҫырлахман, тепĕр ҫул ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен турнирне ирттерме пуҫланӑ. Кӑҫалхи – виҫҫĕмĕш. Ӑмӑртӑва Чаткассемсĕр пуҫне Канаш, Елчĕк, Патӑрьел районĕсенчи, Шупашкар, Ҫĕнĕ Шупашкар хулисенчи тата Чĕмпĕр облаҫĕнчи Нагаткин поселокĕнчи спортсменсем пуҫтарӑннӑ.

Республикӑра хальхи вӑхӑтра ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен ӑсталӑхĕ ҫӳллĕ шайра пулнине палӑртмалла. Мĕн ачаран спортпа туслӑ этемĕн ҫан-ҫурӑмĕ те тĕреклĕ, илемлĕ. Ҫитĕнекен ӑру патвар та сывлӑхлӑ ӳсни пĕлтерĕшлĕ. Ялти культура ҫуртĕнче халӑх пуҫтарӑннӑ. Ҫивĕч кĕрешӳре ҫĕнтерӳҫĕсене палӑртрĕҫ. Тĕнчери паллӑ кĕрешӳҫĕ Олег Захаров спортсменсене саламласа хавхалантарчĕ. Уява пуҫтарӑннисене эстрада артисчĕсем савӑнтарчĕҫ.

■ **Владимир ГАЛОШЕВ**

**Кӑларӑма Андрей МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

# Пурнăçĕ ырлăх таппинчен тăратчĕ...



**Канлĕх мĕн иккенне пĕлмен Аркадий Казанов çак сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарса пама тăхтарах тăратчĕ. «Ĕçлемесĕр нимĕн те пулмасть», «Утакан çитет», – тенĕ чăвашсем», – хуравлатчĕ яланах.**

Аркадий Петрович – чăваш пичечĕн ĕçне чунран парăннă калем ăсти. Чылай очерк, эссе, тĕрленчĕк, сăвă çырнă. Хăй тӳрĕ кăмăллă çын пулнă май ыттисене ырă сунса пурăннă. Мăшăрĕпе Лидия Григорьевнăпа ачисене, мăнукĕсене юратса çитĕнтернĕ.

Вăл «Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «РСФСР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ, пултарулăхĕшĕн Çемен Элкер ячĕллĕ премипе чысланă.

Шел... Пĕтĕм чун-чĕререн шел: иртнĕ çулхи нарăсăн 21-мĕшĕнче вăл пирĕнтен ланлăхах уйрăлса кайрĕ...

Тĕл пулмассерен «Ырлăх таппин асамçи», – теттĕм ăна куç кĕретĕн. Чăнах та çапла мар-и вара?

Ун чухне унăн «Ырлăх таппи» кĕнеки кун çути курманччĕ-ха. Чăн-чăн пултарулăхне тивĕçлипе хакласа тата хăйĕн хайлавĕсемпе пире савăк-телей парнеленĕшĕн çапла калаттăм ăна. Мĕн чухлĕ çынна савăнăç кӳмен-ши вăл хăйĕн произведенийĕсемпе? Кашни хайлавĕнчех вĕсене ырлăх, тĕрĕслĕх, пурнăç таппи суннă вĕт.

Юлашки кĕнеки «Ырлăх таппи» /2013 ç./ пулчĕ. Ал çырăвĕ вара нумай юлчĕ. Асăннă кăларăмри икĕ статйи – ман çинчен. Чăн та, пурнăçăма хăйĕн хайлавĕнче сăнарлакан пĕрре кăна мар пулнă-ха, анчах Аркадий Петрович пек ăшшăн та чуна пырса тивмелле пĕри те сăнлама пултарайман. Вĕсенчен пĕрне хăй çырнă сăвва эпиграфа кăларса уçнă:

«Йăлтăртатрĕ пурнăç çулĕ,
Мĕскер кăна курмарăн
пулĕ,
Çапах та ураран ӳкмен.
Аçу-аннӳ ырра вĕрентнĕ –
Эс çавă витĕмпе вăй илнĕ.
Суйланă çулшăн ӳкĕнмен».

Кĕнекине вулатăп та шухăша путатăп: Аркадий Петровичăн тăван районĕнчи ялсенче вăл пĕлмен çын та юлман пулĕ тетĕп: ара, Вăрмар, Канаш районĕсенчи, çавăн пекех Чăваш хутлăхĕнчи маттурсене сахал мар хайлав халалланă вĕт. Çав повеç-калав тăван халăхăн ылтăн çӳпçинче упранма тивĕç.

«Çынна ăшă кӳме пултаратăн-и? Çавă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ вĕт», – тетчĕ Аркадий Казанов. Ку ыйтăва хуравламашкăн паян питех те ырă тĕслĕх пур манăн. «Ырлăх таппи» кĕнекине вăл хатĕрленĕ-ха, анчах кăларайман. Ĕлкĕреймен эппин. Çак ĕçе мăшăрĕ Лидия Григорьевна Казанова-Ковалевская вĕçне çитерчĕ.

Сăнани, кăтартса пани, хальхи пурнăçа хаклани çак кĕнекере темĕн чухлех. Акă «Çынна ырă кӳме пултаратăн-и?» хайлавах илер. «Колхозсене йĕркеллĕ тытса пымаллаччĕ...Чăх тата сурăх фермисене, садсене пĕтерчĕç... Намăс пире: уйĕ-уйĕпе çум курăк ашкăрать!» – тет тĕп сăнарсенчен пĕри. Чăн та çаплах, килĕшме тивет.

Унăн повеç-калавĕнче чăвашăн вăй-халне, çепĕç чĕлхине, ырă йăли-йĕркине, сăпайлăхне, ĕçченлĕхне туйса тăратăн. Сăнарĕсем яланах лайăххине упрама, малалла аталантарма чĕнеççĕ.

Аркадий Казановăн пурнăç тĕллевĕ чăвашлăха вăй илтерессипе, тăван чĕлхене упраса хăварассипе çыхăннă. «Чăваш чĕлхине манăçа кăларнă çын чăваш шăрттанне те, какай шӳрпине те, йăвачине те мантăр», – тетчĕ час-часах. Хăватлă та вырăнлă каланă вĕт ентешĕмĕр.



Вăл вырăссен паллă çыравçин А.П.Чеховăн произведенийĕсене уйрăмах кăмăллатчĕ. Эпĕ салхуллă чухне Антон Павлович каларăшĕсене тĕпе хурса тата хăйĕн шухăшне пĕлтерсе çапла хушса хуратчĕ: «Халĕ çавăн пек кăна сиксе тухнишĕн савăн. Йывăртарах та пулма пултарнă вĕт. Пӳрнӳне шăрпăк кĕнишĕнех хуçăлса ӳкме кирлĕ мар – аван-ха, куçа лекмерĕ те. Эсĕ суккăр та, чăлах та марришĕн хĕпĕрте. Пурнăç панă ырлăхăн кашни самантне хаклама пĕл».

Аркадий Казанов 1932 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Пинер ялĕнче çуралнă. Ачалăхĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçипе çыхăннă. Ашшĕ Петр Афанасьевич фронтран таврăнман. Çичĕ ывăлне амăшĕ Екатерина Михайловна хăрах çунат айĕнче çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Ачисемшĕн вăл ырăлăх, ĕçченлĕх тĕслĕхĕ пулса тăнă. Ахальтен мар Аркадий Казановăн пĕрремĕш кĕнеки «Ачапăча сукмакĕсем» ятлă. Ăна автор Çĕр çинчи чи çывăх çыннине – амăшне – халалланă.

Аркадий Петрович калавĕсемпе повеçĕсенчен чылайăшне вуланă эпĕ. Вĕсем килĕшнĕ, килĕшеççĕ те. Тата чуна çывăх. Çапах «Ватă йăмра вилĕмĕ» вара чуна çывăхрах тесшĕн, вăл хăйĕн философиллĕ шухăш-туйăмĕпе, социологи енĕпе, пурнăçа ăнланса çутатнипе тыткăнлать. Ăна вуласа тухсан: «Кунашкаллине эпĕ те пĕлнĕ-çке, илтнĕ-çке», – теттĕм. Ачалăхра пирĕнтен кашнийĕн хăйĕн пысăк йывăççи, ялти ятлă-сумлă ватă, чуна кĕрсе вырнаçнă кайăк-кĕшĕк пулнах. Анчах вулакана Аркадий Казанов куçĕпе курнă ватă йăмра та, çăхан та, кинемей те тĕлĕнтереççĕ кăна мар, тарăн шухăша та яраççĕ. Автор пире пурнăça юратмалли, ыррине упраса хăвармалли çинчен аса илтерет. Ватă йăмра вилĕмĕ этем кун-çулĕнчи пысăк трагеди мар-и вара?

...Вăтам шкул пĕтерсен вăл педагогика институтĕнче, партин аслă шкулĕнче вĕреннĕ. Хĕсметрен таврăнсан пурнăç çулне журналистикăпа çыхăнтарнă: малтанах тăван районĕнчи «Хĕрлĕ ялав», Канаш районĕнчи «Коммунизмшăн» хаçатсенче ĕçленĕ. 1969 çулта республикăра тухса тăнă «Коммунизм ялавĕ» /халĕ – «Хыпар»/ хаçата куçнă, аслă корреспондентран пуçласа редактора çитнĕ. Журналистика уншăн пурнăç шкулĕ шутланнă. Вулакансем ăна шаннă, ĕненнĕ, ырă сĕнӳ-канашне кĕтнĕ. Çынсене яланах пулăшма тăрăшнă вăл. Хăйĕн корреспонденцийĕсенче вăрçă тата ĕç ветеранĕсен, сусăрсен, çул çитменнисемпе аслă ăру çыннисен пурнăçне çутатнă, вĕсене канăçсăрлантаракан ыйтусене хускатнă тата татса памашкăн тӳрремĕнех хутшăннă.

Паян вăл пирĕн хушăра çук, тек нихăçан та пулаймĕ. Çапах та пархатарлă ĕçĕ ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ, вăл хăварнă ырă ят халăх асĕнче яланах упранĕ. Кĕнекисем ырра вĕрентеççĕ, вăй-хал парса тăраççĕ, малашлăха ăнтăлма чĕнеççĕ тата пĕр-пĕрне пулăшса тăма хистеççĕ.

Чăваш литературин пуласлăхĕ çинчен шухăшланă май пултаруллă çыравçăпа, хастар журналистпа, маттур сăвăçпа пирĕн мăнаçланмалла.

«Нумай ĕçлетĕн, Аркадий, нумай... Канма та пĕлместĕн», – терĕм пĕррехинче ăна.

«Çырмасăр пурăнаймастăп çав. Унсăрăн пурнăç тĕллевĕ çухалать, кăмăл-туйăм пусăрăнать. Çавăнпах чăваш халăх хаçачĕпе, тăван чĕлхепе тухакан ытти кăларăмпа çыхăну тытатăп», – пулчĕ унăн хуравĕ.

Аркадий Петрович Казановăн ырă ятне, сумлă ĕçне нихăçан та манăçа кăлармăпăр.

■ **Е.В.ВАСИЛЬЕВ–БУРЗУЙ,**
**педагогика ăслăлăхĕн докторĕ, профессор, Раççей Писательсен союзĕн членĕ**

# Спортпа туслă пулсан



*● Спорт мастерĕн кандидачĕ Николай Петров /Хусан, 1977 çул./.*

Николай Петров Вăрмарти кайăк-кĕшĕк фабрикине аталану çулĕпе 12 çул пултаруллăн ертсе пырать. Производство çулран-çул лайăхланать, продукци калăпăшĕ ӳсет.

Çитĕнӳ хуçалăха пултаруллă, йывăрлăхсене çĕнтерсе, коллектива паянхи пурнăç ыйтнă пек ертсе пынинчен килет. Умри тĕллевсене пурнăçлама Николай Петровичăн вăй-халĕ те, опычĕ те, пĕлĕвĕ те, ăсхакăлĕ те çителĕклех. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл «Раççей Федерацийĕн ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «Чăваш Республикин ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятсене тивĕçнĕ.

Çамрăклах спортпа туслашни пулăшнă та ăна пур енлĕн аталанма, çирĕп вăй-халлă пулма. Вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн Хусанти Бауман ячĕллĕ ветеринари институтне вĕренме кĕрет. Кунта вăй-хала çирĕплетме условисем лайăх, спортăн тĕрлĕ енĕпе секцисем ĕçлеççĕ. Коля вара шывра кимĕпе ишсе ăмăртассине кăмăллать.

– Малтан тренировкăсене Хусан варринчи Кабан кӳллинче ирттереттĕмĕр. Унтан Казанка юхан шывĕнче пуçларăмăр. Владимир Логинов тренер спортсменсен ăсталăхне ӳстерессишĕн мĕн пур тăрăшулăхне паратчĕ, тренировкăсенче çамрăк спортсменсен вăй-халне, чăтăмлăхне тĕрĕслетчĕ. Тăрăшни сая кайман, хулара ирттерекен ăмăртусенче пирĕн институт команди /1 рулевой, кĕсменпе авăсаканнисем улттăн/ яланах малти вырăнсене çĕнсе илетчĕ. Ăнăçу ăмăртура кашни спортсмен мĕнле тăрăшнинчен килет-çке. Пĕр-пĕрне лайăх ăнланакан спортсменсенчен чăмăртанчĕ те пирĕн вăйлă та туслă команда. 1974-1975 çулсенче СССРти халăхсен улттăмĕш Спартакиади иртрĕ. Тутар АССР ДОСААФăн облаç комитечĕ пысăк кимĕпе ишсе республикăра мала тухассишĕн ăмăрту йĕркелерĕ. Çивĕч кĕрешӳре ветеринари институчĕн команди пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ, РСФСРти зонăри ăмăртăва хутшăнма путевка çĕнсе илтĕмĕр», – аса илет институтра вĕреннĕ вăхăта Николай Петрович.

Команда çитĕнĕвĕсенче Н.Петров студентăн тӳпи те пысăк пулнă. Ăна I степень Дипломпа наградăланă.

1975 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕ халĕ те ун асĕнчех. Калининградра РСФСРăн Тĕп зонинчи çамрăксен хушшинче кимĕпе ишсе мала тухассишĕн ăмăрту иртнĕ. Тупăшăва 12 команда хутшăннă. Тутар АССРĕн туслă команди иккĕмĕш вырăн йышăннă. Командăн ытти членĕпе пĕрлех Н.Петрова та ДОСААФăн Тĕп комитечĕн II степень Дипломпа чысланă. Вăл СССР спорт мастерĕн кандидачĕн нормативне тултарнă.

Çак ăмăрту пирки Н.Петров акă мĕн каласа парать: «Ăмăртăва пĕтĕмлетме тата çĕнтерӳçĕсене чыслама Совет Союзĕн виçĕ хут Геройĕ, ДОСААФăн Тĕп комитечĕн председателĕ А.Покрышкин хăй килсе çитрĕ. Мана Дипломпа наградăланă чухне алла хыттăн чăмăртаса çапла каларĕ: «Маттур! Паянхи ăмăртăва хутшăннисенчен эсĕ пĕртен пĕр чăваш. Малашне те пултаруллă пул». Çакă манна чăннипех те савăнтарчĕ, хавхалантарчĕ те. Ку ăмăрту хыççăн пирĕн туслă команда кимĕпе ишсе СССРта мала тухассишĕн Севастопольте иртернĕ ăмăртăва хутшăнчĕ. Çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен нумай команда килнĕччĕ. Апла пулин те тăваттăмĕш вырăн йышăнма пултартăмăр».

■ **Анатолий ХОВАНСКИЙ.**
Вăрмар районĕ

*Кулăшла калав*

# Кĕрӳ лайăх çав...

Эх, уявсем, иртсе кайрĕç çав вĕсем. Пĕр вырăнта нимĕн те тытăнса тăмасть вĕт. Йăлтах хыçа юлать: савăнăçĕ те, пăшăрханăвĕ те. Пурнăçра тем те пулать, хĕпĕртетĕн кăна, çав самантрах кулянмалли сиксе тухать...

Тăтăшах ача пăхтараççĕ мана. Хĕрĕмпе кĕрӳ яланах ерçӳсĕр: пĕри – ĕçре, тепри – ĕçкĕре.

Ку хутĕнче çулталăк çурăри Катьăна килсе ячĕç. Мăнукăма çав тери юрататăп. Ара, хамăр юн вĕт. Ачан ачишĕн эпир, кукамăшĕ-асламăшĕ, чуна пама хатĕр. Вĕсене лайăх пултăр тесе хыпса çунатпăр, хамăр пирки пачах манатпăр.

Мăнукăма сĕт вĕретсе ĕçтерме шухăшларăм. Пĕчĕк кастрюле балкона тухса лартнăччĕ те ăна илме йăпăртлăха тесе унта халат вĕççĕнех, тапăчкипех тухрăм.

Ак хайхи, алăка тĕкетĕп – уçăлмасть, Катюша питĕрсе лартнă, хăй пӳлĕмре кулкаласа тăрать.

«Уç, – тетĕп. – Алăка уç. Сивĕ кунта». Ача пуçне сулласть. Ăна ăнлантаратăп: «Апла тыт, капла пăр, хытăрах...» Çук, тем каласан та уçма пĕлмест. Пĕччен юлнăскер кĕçех йĕме тытăнчĕ, ăна кура хамăн та куç шывланчĕ. Тинех шăнса хытатăп ĕнтĕ. Вилессе вилместĕп-ха. Çапах çӳçенме пуçларăм, чĕтреме тытăнтăм. Унталла пăхатăп, кунталла – урамра пĕр çын та курăнмасть. Унччен те пулмарĕ, юнашар çурт кĕтесĕнчен пĕр арçын тухрĕ. Кĕреçе йăтнă хăй, аллинче – пысăк шăпăр. Тирпейлӳçĕ иккен, çĕрĕпех çунă юра тасатасшăн пулинех. Савăнсах кайрăм, ăна кăшкăрсах чĕнсе илтĕм. Лару-тăрăва ăнланчĕ çакскер, эпĕ пĕлтернĕ адреспа кайрĕ. Çук, хĕрхеннипе мар, эпĕ шантарнă пĕрер кĕленче коньякпа шампань эрехлĕ пулас тесе.

Çăлăнăç килессе чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Шăнса кайнипе хутланса лартăм, çара урана халат аркипе хупларăм. Куçран куççуль шăпăртатать. Çав вăхăтрах çула та сăнатăп, курах кайрăм – кĕрӳ васкамасăр утса килет, аллине кĕсйине чикнĕ хăй, шăхăркаласа кăна пырать.

– Ут хăвăртрах, шăнса вилетĕп, – тетĕп аран-аран.

– Пĕлетĕп, – сас парать хайхискер. – Анчах сана пулăшаймастăп: манăн уçă çук, Маша пĕрле ĕçе илсе кайнă. Чăтас пулать санăн.

– Мĕн туса тăратăн? Вĕçтер ун патне...

– Ăçта? – енчен енне сулкаланать урăлса çитеймен кĕрӳ.

– Маша патне ĕçе чуп, – ăнлантаратăп ăна. – Унсăрăн кĕçех шăнса хытатăп. Балконрах вилсе вырттăр тетĕн-и?

– Эсĕ виличчен... Пирĕнтен те ытларах пурăнăн-ха.

– Кĕрӳ, çын пул-ха. Катя та йĕрет вĕт, мана мар тăк ăна хĕрхен хуть.

– Мĕншĕн чупса çӳремелле манăн? Телефон çумрах вĕт, халех шăнкăравлатăп. Тупнă кулянмалли...

Кĕçех пирĕн çурт умĕнче такси чарăнчĕ.

– Анне, эсĕ сывах-и? Катя чиперех-и? Хăранипе хам та кĕçех... Ах, ачам, кукамуна шăнтса вĕлеретĕн вĕт, – пӳлĕне-пӳлĕне сăмахлать сăнран шурса кайнă хĕрĕм. Калаçайми пулнăскер сиксе чĕтретĕп. Утиял ăшне тӳрех чăмрăм.

Инкекрен кĕрĕвех хăтарчĕ. Куркапа эрех вĕрилентерсе ман пата илсе пычĕ. «Çакна ĕç-ха», – хистет вăл.

– Кай кунтан, – тетĕп аран тухакан сасăпа.

– Эсĕ пĕчĕк ача мар, кутăнлашса ан лар, ĕçнĕ пултăр! Унсăрăн ӳпкӳ-пĕверӳ шăнса пăсăлĕ. Хирĕçлетĕн тĕк сыватмăша ăсататпăр ак,– тенĕ хыççăнах тăрса лартăм, куркари хаяр шĕвеке пĕр сывламасăр çăтса ятăм – ăш-чикĕм вĕриленсе кайрĕ. Хĕрпе кĕрӳ ăшă утиялпа витсе вырттарчĕç, çиелтен кĕрĕкпе хупларĕç. Пĕр туйми çывăрнă вара. Чăм шыва ӳкнипе вăранса кайрăм. Хамăн нимĕн те ыратмасть. Тавах кĕрĕве, лайăх çын çав вăл манăн.

■ **Лидия САРИНЕ**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

*Чĕлхе*

# В.Станьял сĕнĕвĕпе килĕшме çук

***/«Тимĕрçĕсен пуртти катăк...» статьяпа паллашнă май/***

Сăмахсене пĕрле, уйрăм е дефиспа çырасси, чăнах та, тавлашуллă ыйту. Юлашки çулсенче /1995, 2007/ чăваш орфографийĕпе ĕçлекенсем нумай ĕç турĕç. Ăслăлăх енчен сăмахсене /хутлă, мăшăр сăмахсем, сăмах майлашăвĕ/ мĕнле çырмаллине ĕнентерӳллĕн уçса пачĕç. Чĕлхеçĕсем çак ĕçе хăйсем тĕллĕн кăна мар, ку е урăх ыйтăва чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсемпе сӳтсе явса татса пачĕç. Сăмах пĕлтерĕшĕсене, пулăмĕсене уçса, тупса, шĕкĕлчесе чăваш чĕлхи ыйтăвĕ йĕри-тавра калаçрĕç, тавлашуллă кашни сăмаха мĕнле çырмаллине тĕплĕн ăнлантарчĕç. «Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ» /2002/ ӳсекен ăру валли паха кĕнеке пулса тăчĕ. Вĕренекенсем сăмахсене пĕрле, уйрăм, дефиспа çырма хăвăрт вĕренеççĕ. Вĕрентекенсем те çĕнетнĕ орфографипе кăмăллă. Кашни ача е вĕрентекен словарьти пур сăмаха мĕнле çырмаллине пĕлмесен те пултарать /çавăнпа усă курма словарь тăваççĕ те, тытмалла та пăхмалла, мĕнле çырмаллине ас туса юлмалла/. Кашни çын ку е урăх сăмаха хăй пĕлнĕ пек çырса орфографи йĕркине пăрахăçлас пулсан мĕн патне пырса тухăпăр?! Кашни пилĕк çулта çĕнетнĕ орфографи словарĕ кăларса ачасен пуçне минретмелле мар тесе шухăшлатпăр эпир, чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенсем.

Хальхи орфографи чăваш чĕлхин тытăмĕпе тӳррĕн килĕшсе тăрать, çавăнпа вĕрентме те, вĕренме те меллĕ.

**Чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенсем:**

**Вериялова Марина Михайловна, Тутарстан Республикин Пăва районĕн Пӳркел вăтам шкулĕ**

**Семенова Людмила Васильевна, Чăваш Республикин Муркаш районĕн Ильинка вăтам шкулĕ**

**Малова Галина Ивановна, Чăваш Республикин Елчĕк районĕнчи Чăваш Тăрăм шкулĕ**

**Егорова Ольга Анатольевна, Чăваш Республикин Тăвай районĕ**

**Гаврилова Светлана Петровна, Чăваш Республикин Шупашкар районĕ**

**Шишкина Алевтина Евгеньевна, Чăваш Республикин Шупашкар районĕ**

**Григорьева Галина Андреевна, Чăваш Республикин Вăрнар районĕ**

**Павлова Елена Александровна, Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕ**

**Трофимова Рина Рудольфовна, Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕ**

**Блинова Надежда Николаевна, Чăваш Республикин Муркаш районĕн Атапай тĕп шкулĕ**

**Михайлова Елена Владимировна, Тутарстан Республикин Пăва районĕн Адав-Тулумбай вăтам шкулĕ**

**Тарасова Любовь Николаевна, Чăваш Республикин Комсомольски районĕнчи Шурут вăтам шкулĕ**

**Сайкина Надежда Михайловна, Тутарстан Республикин Пăва районĕн Рункă вăтам шкулĕ**

**Семенова Регина Алексеевна, Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕ**

**Милаева Лариса Витальевна, Чăваш Республикин Куславкка районĕнчи Кунер шкулĕ**

**Петрова Антонина Геннадьевна, Чăваш Республикин Шăмăршă районĕ**

**Смирнова Нина Алексеевна, Чăваш Республикин Комсомольски районĕнчи Хирти Мăнтăр шкулĕ**

**Леонтьева Ирина Анатольевна, Чăваш Республикин Елчĕк районĕ**

**Бархонова Зоя Витальевна, Чăваш Республикин Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Мăрат вăтам шкулĕ**

# Ăçта эсир, çерем уçакансем!

Кăçалхи пуш уйăхĕн 27-28-мĕшĕсенче Алтай крайĕн тĕп хулинче – Барнаулта – ССР Союзĕнчи çеçен хире пусă çаврăнăшне кĕртсе ял хуçалăх культурисем çитĕнтерме тытăннăранпа 60 çул çитнине паллă тăваççĕ. Унта иртекен савăнăçлă пухăва хутшăнма Чăваш Енрен те делегатсем яраççĕ. Вĕсене пухма, çул çӳрев ыйтăвне татса пама Ял хуçалăх, Вĕренӳ, Культура, Информполитика министерствисен, АПК ветеранĕсен пĕрлĕхĕн представителĕсенчен ĕç ушкăнĕ йĕркелеççĕ.

Казахстанра, Алтай тăрăхĕнче, ытти регионта 1950 çулсенче ĕçленисем республикăра çĕр-çĕр çын пурăнать. Тăван ял-хулана патшалăх наградипе таврăнни те йышлă. Çавăнпа делегацие кĕртмешкĕн чи тивĕçлисене суйласа илме çăмăл мар.

Барнаулти уява Раççейĕн 12 регионĕн элчисем хутшăнассине пĕлтернĕ ĕнтĕ.

■ **С.СЕРЕГИН**

# Право сехечĕсем – пурин валли те

Республика прокуратури граждансем валли тĕрлĕ ыйтупа право сехечĕсем йĕркелессине йăлана кĕртрĕ. Çитес кунсенче çавнашкал черетлĕ тĕл пулусем иртеççĕ.

Нарăсăн 26-мĕшĕнче 16-18 сехетсенче Наци библиотекинче суд йышăнăвĕсене ирĕксĕрлесе пурнăçлас тата нумай хваттерлĕ çуртсенчи пӳлĕмсен хуçисен прависене хӳтĕлес ыйтусене сӳтсе явма палăртнă. Прокуратура ĕçченĕсемпе пĕрлех унта Раççей юристсен ассоциацийĕн республикăри уйрăмĕн представителĕсем те хутшăнĕç. Граждансене асăннă ыйтусемпе çыхăннă саккунсен положенийĕсене, суд приставĕсен ĕçне сăнаса тăракан прокурор полномочийĕсене, граждансен çак сферăри прависене хӳтĕлемелли майсене ăнлантарса парĕç.

Нарăсăн 28-мĕшĕнче Наци библиотекинчех 14-16 сехетсенче иртекен тĕл пулура нумай хваттерлĕ çуртсенчи пӳлĕмсен хуçисен прависене тишкерессине тĕпе хунă. Прокурорсен тĕрĕслевĕсем çурт-йĕр фондне тытса тăракан организацисем коммуналлă пулăшу ĕçĕсене пурнăçланă чухне йĕркене пăснă чылай тĕслĕхе тăрă шыв çине кăлараççĕ. Çав шутра – çынсен пĕрлехи пурлăхне тытса тăнă, юсанă, хваттершĕн тӳлемелли виçене шутласа панă чухне саккуна пăсаççĕ. Право сехечĕсенче ЖКХ сферинчи çак ыйтусене пайăр тĕслĕхсене тĕпе хурса тишкерĕç. Тĕл пулусене пурте хутшăнма пултараççĕ.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

**Паян «Сывлăх» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ**



**● Юн тымарĕсем сарăлсан.**

**● Артрозран – çĕр улми çеçкипе.**

**● Урпа тухсан эмел курăкĕсем паха.**

**● Мармелада ачасем те, çитĕннисем те кăмăллаççĕ.**

# Дактилоскопи тума

***Федерацин миграци службин республикăри управленийĕн Шупашкарти Калинин районĕнчи пайĕ граждансене хăйсен ирĕкĕпе патшалăх дактилоскопи регистрацине тума чĕнет.***

Ытлари кунпа кĕçнерни кун – 13-18, юн кунпа эрне кун – 9-15, шăмат кун 8-14 сехетсенче йышăнаççĕ. Тăхтав вăхăчĕ – 12-рен пуçласа 17 сехетчен. 8/352/ 63-03-82, 63-22-75 телефонсемпе шăнкăравласа ыйтса пĕлме пулать.

Дактилоскопи – пӳрне йĕрĕсене илмелли процедура, унпа çынсене паллама усă кураççĕ. Дактилоскопи регистрацийĕ сывлăхшăн пачах та сиенлĕ мар, ăна граждансен прависемпе ирĕкĕсене уяса пурнăçлаççĕ. Çак ĕçе «Раççей Федерацийĕнчи патшалăх дактилоскопи регистрацийĕ çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн тăваççĕ, регистраци ирттернĕ май илекен информацие вăрттăнлăхра тытаççĕ.

Хăйĕн ирĕкĕпе дактилоскопи регистрацийĕ витĕр тухма гражданинăн ФМС управленийĕн сотрудникĕсене çак документсене памалла: регистрациленме çирĕплетнĕ йĕркепе ыйтса çырни, паспорт; 14 çул тултарман ачасен çуралнине ĕнентерекен свидетельство кăтартмалла.

■ **Надежда ПАВЛОВА,**
**ФМСăн Шупашкарти Калинин районĕнчи пайĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан**

## *Саламлатпăр*



***Хисеплĕ кине, инкене – Патăрьел районĕнчи Сител ялĕнче пурăнакан Вера Ильинична КОЗЛОВĂНА – 55 çул тултарнă ятпа чи ырă та ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Сумлă юбилейпе ăна ырлăх-сывлăх, тулли телей, ĕçре тата çемьере чи ырă ӳсĕмсемпе хутшăнусем, çирĕп юратупа çутă малашлăх, ăнăçу сунатпăр.***

***Хаклă çыннăмăр! Мăшăрун тата ачусемпе мăнукусен ырлăхĕпе киленсе нумай-нумай çул пурăнмалла пултăр.***

***Сума суса – Патăрьелти Козловсен çемйи.***

* * *

***Тюмень облаçĕнчи «Чăвашсен «Тăван» ассоциацийĕ» общество организацийĕ ячĕпе Елена Евсеевна МАЛИНĂНА 50 çулхи юбилейĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, Тюмень облаçĕнче чăваш наци культурине пропагандăлас тĕлĕшпе пысăк тӳпе хывнăшăн тав тăватпăр.***

***Телей, çирĕп сывлăх, ăшă кăмăл, пултарулăхра ăнăçу сунатпăр.***

***Хисеплесе, «Тăван» ассоциаци председателĕ А.И.Архипов.***

ИЗВЕЩЕНИЕ

Администрация Батыревского района Чувашской Республики сообщает о наличии земельного участка сельскохозяйственного назначения для ведения сельскохозяйственного производства для предоставления в аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:110501:77, площадью 127274 кв.м., местоположение: установлено относительно ориентира в юго-восточной части кадастрового квартала 21:08:110501, расположенного в границах участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Батыревский район, Туруновское сельское поселение.

За справками, информациями, претензиями обращаться в отдел сельского хозяйства, экологии, экономики, земельных и имущественных отношений администрации Батыревского района Чувашской Республики в течение месяца со дня опубликования в газете. Дополнительная информация по тел. 8(83532) 6-18-37, 8(83532) 6-14-26.

Администрация Вурманкасинского сельского поселения Вурнарского района планирует предоставить в аренду земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения сроком на 49 лет /сорок девять/ лет с кадастровым № 21:09:170201:626, площадью 205702 кв.м, расположенный по адресу: Чувашская Республика - Чувашия, р-н Вурнарский, с/пос Вурманкасинское, для сельскохозяйственного производства.

ПРОДАЮ

**33.Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕнче тухать.**

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун” – 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă” рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 609.